# Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламлатпăр!

ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

18 (4380) №, 2014, çу, 8 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.

Индексĕ: 54802.

ПАТТĂР САЛТАК

## Виçĕ вăрçă вучĕ витĕр тухнă ветеран



**Шупашкарта пурăнакан тăхăр вун пиллĕкри вăрçă ветеранĕ Алексей Алексеевич Яковлев паян та килте ахаль ларма юратмасть. Час-часах шкул ачисемпе тĕл пулма васкать вăл.**

– Иртнĕ вăхăта хальхи ăрăва каласа кăтартмаллах. Эпир мĕн тӳснине вĕсен нихăçан та курмалла ан пултăрччĕ. Килĕштерсе савăнса кун-кунланине нимĕн те çитмест, – тет вăл паян та кашни çамрăка ыра суннă май.

Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнче нумай ачаллă çемьере кун çути курнă Алексей Алексеевич. Шкултан вĕренсе тухсан Шупашкарти педагогика техникумĕнче пĕлĕвне малалла аталантарнă. Хыççăнах Етĕрнери Хучаш шкулĕнче вăй хума тытăннă. 1938 çулхине вара Хĕрлĕ Çар ретне тăнă.

...Финн, Аслă Аттелĕх тата Яппун вăрçисем витĕр тухнă хастар салтак пĕрре мар аманнă, госпитальсенче сипленнĕ. Паттăрлăхне кура çамрăк чылай орден-медале тивĕçнĕ.

– Уйрăмах Сталинград çывăхĕнчи хаяр çапăçу нихăçан та манăçа тухмĕ. Тăшмана хирĕç арăсланcем пек ыткăнтăмăр. Мĕн тăвăн, çухатăвĕ те пысăк пулчĕ çав, – ассăн сывлать ветеран.

Вăрçă хыççăн шкулта ĕçлеме тытăннă Алексей Алексеевич. Шăп çав вăхăтра вăрçă ахрăмне пула çӳççĕр тăрса юлнă вăл. Çакăншăн питĕ намăсланнă çамрăк. Аптăранă енне пуçне бинтласа çӳренĕ. Пĕррехинче ырă кăмăллă çын ăна канаш панă. Пылтан хатĕрленĕ сиплĕ эмелпе пуçа сĕрме хушнă. «Темĕн çав, çук çӳçе вăйпа çĕнĕрен ӳстереймĕн ĕнтĕ», – тесе иккĕленнĕ малтанах. Кайран мĕн пулать те, мĕн килет тесе ĕçе тытăннă. Чăн та, кăшт вăхăт иртсен ĕç ăнăçнă. Пĕчĕккĕн шăтакан çӳçĕсене куллен тытса савăннă педагог.

Çакăн хыççăн шкулта вăй хуракан хастар учитель ветеринари техникумне куçăмсăр мелпе вĕренме кĕнĕ. «Манăн та пыл хурчĕсен усăллăхĕ пирки нумай япала пĕлес килет», – тенĕ хăй ăшĕнче.

1969 çулта Алексей Алексеевич çемйипе Шупашкара куçса кайнă та 33-мĕш шкулта ĕçлеме тытăннă. Тивĕçлĕ канăва кайсан та ала усса ларас темен вăрçă паттăрĕ. Ăна ялти утарçă вырăнне ĕçлеме йыхравланă. Хирĕçлеймен вăл, пĕтĕм кăмăлтан унта вăй хума тытăннă. Хăйне шанса панă ĕçре 12 çул тăрăшнă Алексей Алексеевич.

Паян вăл Шупашкарта хĕрĕ патĕнче пурăнать. Çĕнтерӳ кунне чăтăмсăррăн кĕтет.

*Элиза ВАЛАНС.*

Шупашкар.

## Паянхи номерте:

*• Республикăри çамрăк корреспондентсен слечĕн делегачĕсен тулли списокĕ* **2 стр.**



• Комсомольски 1-мĕш шкулĕ çĕр-шыв конкурсĕнче çĕнтернĕ **3 стр.**

*• Куснар шкулĕн маттур тимуровецĕсем паян та хастар* **5 стр.**





*• Олег Шурумкин чăн-чăн спортсмен* **9 стр.**

*• Муся Пинкензонăн сĕрме купăсĕ тăшмана тарăхтарнă, совет салтакĕсене хавхалантарнă* **10 стр.**



**Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш патшалăх пукане театрĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕн çамрăк корреспонденчĕсен слечĕ иртет.**

**Делегатсен спискĕ:**

**Элĕк районĕ**
Кристина АРТЕМЬЕВА (Мăн Вылă шкулĕ);
Инесса ШАШКИНА (Мăн Вылă шкулĕ);
Анжелика ЕМЕЛЬЯНОВА (Чăваш Сурăм шкулĕ);
Константин ИГНАТЬЕВ (Чăваш Сурăм шкулĕ);
Олеся НИКОЛАЕВА (Чăваш Сурăм шкулĕ);
Людмила КАПИТОНОВА (Юнтапа шкулĕ).

**Улатăр районĕ**
Андрей НИКИШИН (Кивĕ Эйпеç шкулĕ);
Настя РЫБКИНА (Кивĕ Эйпеç шкулĕ);
Петр ЛУБАШКИН (Кивĕ Эйпеç шкулĕ).

**Патăрьел районĕ**
Таисия ГЛУХОВА (Сăкăт шкулĕ);
Аня ТАБАКОВА (Тури Туçа шкулĕ);
Александра ВОРОБЬЕВА (Тури Туçа шкулĕ);
Кристина ЩЕРБАКОВА (Тури Туçа шкулĕ);
Гена ЛАРЕВ (Пăлапуç Пашьел шкулĕ);
Лида ХРОМОВА (Пăлапуç Пашьел шкулĕ);
Сергей МЕШКОВ (Пăлапуç Пашьел шкулĕ);
Павел СОБОЛЕВ (Пăлапуç Пашьел шкулĕ).

**Вăрнар районĕ**
Катя СУДОВА (Калинино шкулĕ);
Таня НИКОЛАЕВА (Калинино шкулĕ);
Саша АНТОНОВ (Калинино шкулĕ).

**Йĕпреç районĕ**
Анна ВАСИЛЬЕВА (Çăкалăх шкулĕ);
Катя КОШЕЛЕВА (Çăкалăх шкулĕ);
Юля КУЗЬМИНА (Çăкалăх шкулĕ);
Настя ВЯЦКОВА (Чăваш Тимеш шкулĕ);
Надя ФЕДОТОВА (Чăваш Тимеш шкулĕ);
Данил ЕВДОКИМОВ (Чăваш Тимеш шкулĕ);
Юлия АЛЕКСЕЕВА (Чăваш Тимеш шкулĕ);
Настя СЮДАМОВА (Чăваш Тимеш шкулĕ);
Злата КАНАРЕЙКИНА (Чăваш Тимеш шкулĕ);
Юлия МИХАЙЛОВА (Чăваш Тимеш шкулĕ).

**Канаш районĕ**
Ксения НИКОЛАЕВА (Катек шкулĕ);
Никита ВАСИЛЬЕВ (Катек шкулĕ);
Альберт ДАНИЛОВ (Катек шкулĕ);
Августина НЕСТЕРОВА (Энтрияль шкулĕ);
Алита ИГНАТЬЕВА (Ешкилт шкулĕ);
Настя ЕГОРОВА (Уçырма шкулĕ).

**Комсомольски районĕ**
Ангелина ВАСИЛЬЕВА (Шурут шкулĕ);
Ирина НИКИФОРОВА (Шурут шкулĕ);
Никита ПЫРКИН (Шурут шкулĕ);
Кристина НИКИФОРОВА ( Комсомольски 1-мĕш шкулĕ);
Яна КЛУПАЕВА (Комсомольски 1-мĕш шкулĕ);
Ирина ТИМОФЕЕВА (Комсомольски 1-мĕш шкулĕ);
Анна ИШМУРАТОВА (Хырай Ĕнел шкулĕ);
Роман КРАСНОВ (Хырай Ĕнел шкулĕ);
Дмитрий КАБАЛИН (Хырай Ĕнел шкулĕ);
Мария СВЕКЛОВА (Нĕркеç шкулĕ);
Руслан ЧЕРНОВ (Нĕркеç шкулĕ);
Кристина КОШКИНА (Нĕркеç шкулĕ);
Сергей АНТОНОВ (Нĕркеç шкулĕ);
Маша ИВАНОВА (Нĕркеç шкулĕ).

**Куславкка районĕ**
Дмитрий СЕМЕНОВ (Кунер шкулĕ);
Аня НИКОЛАЕВА (Кунер шкулĕ).

**Красноармейски районĕ**
Артем ЕГОРОВ (Чатукасси шкулĕ).

**Хĕрлĕ Чутай районĕ**
Наташа МИХАЙЛОВА (Штанаш шкулĕ);
Алеша ЯШМЕЙКИН (Штанаш шкулĕ);
Станислав МАНИН (Штанаш шкулĕ);
Наташа ПАРИКОВА (Штанаш шкулĕ);
Настя ИВАНОВА (Штанаш шкулĕ);
Вера УСТИНОВА (Штанаш шкулĕ);
Диана МАНИНА (Штанаш шкулĕ);
Анна МИХЕЕВА (Мăн Этмен шкулĕ);
Ирина ПАНДАКОВА (Çĕнĕ Атикасси шкулĕ);
Сергей БАРМИН (Çĕнĕ Атикасси шкулĕ);
Дмитрий ИЛЬИН (Çĕнĕ Атикасси шкулĕ);
Динара ФАТТАХОВА (Хусанушкăнь шкулĕ).

**Муркаш районĕ**
Виктория ЯКИМОВА (Юнкă шкулĕ);
Галина МАКСИМОВА (Шетмĕпуç шкулĕ).

**Сĕнтĕрвăрри районĕ**
Ирина АГАТЕЕВА (Карапаш шкулĕ);
Владлен АЛЕКСЕЕВ (Карапаш шкулĕ);
Родион АЛЕКСЕЕВ (Карапаш шкулĕ).

**Вăрмар районĕ**
Наташа ХРИСТОФОРОВА (Пысăк Енккасси шкулĕ);
Алина ИВАНОВА (Тикаш шкулĕ);
Данил СКВОРЦОВ (Кĕтеснер шкулĕ);
Анастасия ВИКТОРОВА (Кĕтеснер шкулĕ);
Таня ТИМОФЕЕВА (Кивĕ Вăрмар шкулĕ).

**Тăвай районĕ**
Ольга НИКИФОРОВА (Элпуç шкулĕ);
Артем МАТВЕЕВ (Элпуç шкулĕ);
Даша БОРИСОВА (Элпуç шкулĕ);
Владислав ВОЕВОДОВ (Элпуç шкулĕ);
Алеша СЕМЕНОВ (Элпуç шкулĕ);
Милана ЕФРЕМОВА (Элпуç шкулĕ);
Таня ВАСИЛЬЕВА (Элпуç шкулĕ);
Леша ИВАРБЕЕВ (Элпуç шкулĕ);
Ольга ФЕДОРОВА (Элпуç шкулĕ).

**Шăмăршă районĕ**
Лиза САМАРИНА (Пăчăрлă Пашьел шкулĕ);
Ксения МАТВЕЕВА (Пăчăрлă Пашьел шкулĕ);
Оля АЛЕКСАНДРОВА (Пăчăрлă Пашьел шкулĕ);
Ангелина БАЛАКИРОВА (Палтиел шкулĕ).

**Çĕрпӳ районĕ**
Диана МОИСЕЕВА (Чурачăк шкулĕ);
Полина ИВАНОВА (Тавăшкасси шкулĕ);
Анна ФЕДОРОВА (Первомайски шкулĕ);
Алексей ЕГОРОВ (Первомайски шкулĕ).

**Шупашкар районĕ**
Катя ПЕТРОВА (Ишек шкулĕ);
Софья ГРИГОРЬЕВА (Ишек шкулĕ).

**Елчĕк районĕ**
Кирилл ЧЕРНОВ (Çирĕклĕ Шăхаль шкулĕ);
Элина ИВАНОВА (Кĕçĕн Таяпа шкулĕ);
Юлия АДЮКОВА (Аслă Елчĕк шкулĕ);
Катя ЗАЙЦЕВА (Тĕмер шкулĕ);
Диана АВТОНОМОВА (Тĕмер шкулĕ).

**Етĕрне районĕ**
Венера НИКОЛАЕВА (Мăн Явăш шкулĕ);
Сергей ПЕТРОВ (Палтай шкулĕ);
Сергей СЕРЕБРЯКОВ (Палтай шкулĕ).

**Шупашкар хули**
Анна ПАВЛОВА (Шупашкар, 47-мĕш шкул);
Влада КРАСНОВА (Шупашкар, 47-мĕш шкул);
Кристина ИВАНОВА (Шупашкар, 24-мĕш шкул);
Юлия АЛЕКСЕЕВА (Шупашкар, 24-мĕш шкул);
Рената ЛУКОВА (Шупашкар, 22-мĕш шкул);
Аня СПИРИДОНОВА (Шупашкар, 22-мĕш шкул);
Катя АБРАМОВА (Шупашкар, 9-мĕш шкул);
Мальвина ЗОТОВА (Шупашкар, 10-мĕш шкул);
Яна ИОНОВА (Шупашкар, 10-мĕш шкул);
Настя ИВАНОВА (Шупашкар, 11-мĕш шкул).

**Хăнасене 10 сехетре те 30 минутра регистрациелеççĕ.**

*ПАЛЛАШАР-ХА*

# Акăлчан юррисем чуна çывăх

**Вун пĕрмĕш класра вĕренекен Кристина Арчикова ача садĕнчех хитре юрланă. Çавăн чухнех пĕрремĕш хут ялти клуб сцени çине тухнă та ĕнтĕ. Унтанпа нумай вăхăт иртнĕ. Халĕ Кристина районти, республикăри пур пултарулăх мероприятине те хутшăнать. Хăйĕн çепĕç те уçă сассипе куракансене тыткăнлать.**

Унăн çемйинче пурте юрă-кĕвĕпе туслă – кукамăшĕпе амăшĕ юрлама ăста, кукашшĕ вара ялти паллă купăсçă. Ахăртнех, Кристинăна та çак туртăм çывăх çыннисенчен куçнă.

Пикен пĕрремĕш вĕрентекенĕ ача садĕнчи Юрий Петрович Усов купăсçă пулнă. Вăл хĕр ачан талантне пĕрре курсах туйнă. Пĕчĕкскер тăрăшавĕнче учитель унăн пысăк та çутă пуласлăх пуррине асăрханă. Ăна аталантарас шухăш та канăç паман.

Чăнах та, Кристина шкула çӳреме пуçласан та юрлама пăрахман. Пачах урăхла – хĕр упраç ăсталăхне туптанă, кăтартăвне лайăхлатнă. Уйрăмах вăл акăлчанла юрлама килĕштерет. Районта иртекен акăлчан юррисен "Кĕмĕл шăнкăрав" конкурсне кашни çул хутшăнать. Çак предмет унăн – чи юратни. Тен, Кристина унпах экзамен та тытĕ. Ахальтен мар-çке шкул пĕтерсен куçаруçă профессине алла илесшĕн тăрăшать.

Вырăс, чăваш тата акăлчан юррисене чунтан шăрантараканскер ташлама та ăста. Ку тĕлĕшпе ачаранах шкулти ташă кружокне çӳрет. Тĕрлĕ кăткăс хусканăва та пĕрре кăтартсанах çăмăллăнах ас туса юлать. Кайран пĕр такăнмасăр хăй тĕллĕнех пурнăçлать.

Вĕренӳ отличницин республикăри тĕрлĕ предмет олимпиадине хутшăнса малти вырăнсене йышăнать.

"Муркаш пики – 2014" конкурсра та палăрнă вăл, "Çепĕç пике" ята тивĕçнĕ. Тӳресемпе куракансен умĕнче хăйне тĕрлĕ енлĕн кăтартнă: портфолио хатĕрленĕ, юрланă, тĕрлĕ ыйтăва хуравланă, чăваш апат-çимĕçне хатĕрленĕ, наци тумĕпе сцена çинче илемлĕн утса çӳренĕ.

– Çак конкурс хыççăн эпĕ сцена çинче пăлханма тата шикленме юрамананнине ăнлантăм. Вĕсем чăрмантараççĕ унта. Пит çинче яланах йăл кулă çиçмелле. Мĕнле пăлхансан та куракан çакна сисмелле мар. Кăшт хăюлăрах пулни те кирлĕ çав, – ăнлантарать хастарскер.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕ хыççăн тӳресем ăна: "Маттур, хăвна тивĕçлипех кăтартрăн", – тенĕ хавхалантарса.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Муркаш районĕ,
Калайкасси шкулĕ.



Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2344 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1646
Пичете çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Раççей шайĕнче çĕнтерессе шанман



**Вĕрентекенсем тăрăшнипе, ачасем хăйсем пулăшнипе хальхи вăхăтра чылай шкул хăйĕн хаçатне кăларать. Редколлегире ытларах вăтам, аслă классенче вĕренекенсем. Вĕсемех кирлĕ информацие пухса тусĕсене çĕнĕ те кирлĕ хыпарсемпе паллаштарма васкаççĕ. Шкулти хаçат ĕçĕ мĕнлерех йĕркеленет-ши? Вăл вулакансене тивĕçтерет-и? Çак тата ытти ыйту хуравне пĕлмешкĕн Комсомольски районĕнчи Комсомольскинчи 1-мĕш шкула çитрĕм. Кунта вĕренекенсем тӳрех икĕ хаçат кăлараççĕ. Вĕсенчен пĕри Раççей шайĕнче иртнĕ конкурсра призерсен шутне те кĕнĕ.**

## "Урок вăхăтĕнче коридорта хаçат вуланă"

Кунта тĕрлĕ халăх ачисем вĕренеççĕ. Тен, çавăнпах ытларах вырăсла калаçнине илтме пулать. Чăвашла та шăкăртаттарса калаçаççĕ-ха кунта... Тутар ачисем. Нумай пулмасть район шайĕнче иртнĕ "Чăваш пики" конкурсра шкул чысне тутар хĕр ачи Надия  Абинова хӳтĕленĕ. Мĕн тетĕр? Хăйĕнпе паллаштарнă чухне те вăл чăвашла калаçнă, йăла-йĕркене еплерех пĕлнине кăтартнă. Çапла вăл "Ăслă пике" номинацире çĕнтерсе вице-пике ята çĕнсе илнĕ. Унсăр пуçне шкул ачисем кашни çулах чăваш чĕлхипе иртекен олимпиадăра палăрса республикăра призерсен шутне кĕреççĕ.

Шкулта чылай çул "Шкул калемĕ" кружок ăнăçлă ĕçлет. Кунта çӳрекенсем журналистикăра пĕрремĕш утăмсем тăваççĕ: вĕрентекенсемпе вĕренекенсене тĕрлĕ хыпарпа паллаштараççĕ. 2007 çулта шкул 150 çул тултарнине анлăн уявланă Каçалсем. "Шкул калемĕ" кружока ертсе пыракан Владимир Геннадьевич Гордеев уяв умĕн хаçат кăларнă çĕре кружок ĕçченĕсене  те явăçтарнă. Паллах, кирек мĕнле ĕçе пуçăнсан та йывăрлăхсемсĕр пулмасть. Владимир Геннадьевич та хаçата йĕркеленĕ хушăра унăн формине тупма çăмăлах пулманнине палăртать. Çак çулсенче район шкулĕсенче тухакан хаçатсем пӳрне хуçлатса шутламалăх çеç пулнă-çке. Çапах та пуçăннă ĕçе вĕçне çити тумалла. Хаçат мĕнлерех форматпа тухнине шухăшласа тупсан ĕç майĕпен йĕркеленсе кайнă. Çапла "Çутă хăвăртлăхĕпе" хаçатăн пĕрремĕш номерĕ кун çути курнă.

– Шкул юбилейне халалланă пĕрремĕш номер чăвашла пичетленсе тухрĕ. Малалла икĕ чĕлхепе кун çути курчĕ. Шкулта тĕрлĕ халăх ачисем вĕреннĕрен ытларах вырăсла çыратпăр. Пĕр чĕлхепе çеç тухсан ăна никамах та вуламĕ, – палăртать кружок ертӳçи Владимир Гордеев.

Вăхăт иртсен хаçат ячĕ улшăннă. Хальхи вăхăтра вăл "Шкул хыпарĕсем" ятпа тĕрлĕ тĕспе пичетленет. Паянхи куна унăн пурĕ 41 номер кун çути курнă. Уйăхра пĕрре тухакан хаçатра тĕрлĕ хыпар вуласа пĕлме пулать. Ара, редколлеги членĕсем çеç мар, ытти ачасем те "Шкул хыпарĕсене" тĕрленчĕкпе, статьяпа, сăн ӳкерчĕкпе пуянлатма тăрăшаççĕ-çке. Кружока ытларах 8-11-мĕш класра вĕренекенсем çул такăрлатаççĕ. Вĕсен хушшинче чăваш, вырăс, тутар ачисем.

– Кашниех яваплă ĕçе йĕркеленине ăнланать. Ачасем çырас ăсталăха та ӳстереççĕ, материал хатĕрленĕ вăхăтра вара çынпа хутшăнма вĕренеççĕ. Сăмахран, интервью илесси вăл – чи йывăрри. Калаçнă хушăра тĕрлĕ фактсене тупма пĕлмелле, вулакан патне илсе çитерме тăрăшмалла. Ачасем майĕпен çакна хăнăхса пыраççĕ. Малтанах эпир планпа палăртса пуçтарнă материала калăплатпăр. Макет хатĕрлесе вăл е ку тĕрленчĕке, сăн ӳкерчĕке хăш тĕле вырнаçтармаллине сӳтсе яватпăр. Текстра йăнăшсем пуррине те пăхма манмалла мар, – ăнлантарать Владимир Геннадьевич.

"Шкул хыпарĕсем" хаçата пурте юратса "шĕкĕлчеççĕ". Шкула кĕрсенех стена çинче курма пулать ăна. Килен-каякан ăна нихăçан та вуламасăр пăрăнса утмасть. Уйрăмах тăхтавра шăв-шав хаçат патĕнче. Пурте хыпарсемпе паллашасшăн çунаççĕ. Урок вăхăтĕнче те, тĕлĕнмелле пулин те, коридора тухнă пĕр ача ятарласа хаçат вулама кайнă тĕслĕх те пулнă.

## "Ĕçе конкурса тăратнă хыççăн ун пирки маннă"

Кăçал пирĕн çĕр-шывра Олимпиада иртнине пĕлмен çын та çук пулĕ. Тĕрлĕ массăллă информаци хатĕрĕсем те çынсене спорт хыпарĕсемпе тăтăшах паллаштарчĕç. "Шкул калемĕ" кружок ăстисем те хамăр çĕр-шыв спортсменĕсен çитĕнĕвĕсем, ăнăçсăр саманчĕсем çинчен хаçатра çутатма тĕллев лартнă. Олимп вăййисене халалланă вун сакăр номер пичетленсе тухнă. Ирхине шкула килекен кашни çын Олимпиада хыпарĕсемпе паллашма пултарнă. Пухмачра мĕн чухлĕ медаль? Пирĕн спортсменсем йĕлтĕр спортĕнче палăрнă-и? Редколлеги пĕрремĕш страницăра яланах чи пысăк пулăм пирки çырнă материалпа пĕрле спортсменсен сăн ӳкерчĕкĕсене лартнă. Хаçат ĕçченĕсем ытларах Интернетпа усă курнă, унти статьясене тишкерсе тухса хаçат валли кĕске тĕрленчĕк хатĕрленĕ.

Олимпиада иртнĕ хыççăн информатика вĕрентекенĕ Петр Васильевич Родионов Интернетра "Нева калемĕ" конкурс çинчен вуласа пĕлнĕ. Сăмах май, "Шкул хыпарĕсем" хаçатра Олимпиадăпа çыхăннă материалсене те Петр Васильевич пухнă. Çулленех иртекен конкурса пулас журналистсене пултарулăха аталантармашкăн, çырас ăсталăха ӳстермешкĕн йĕркеленĕ. Вăл Санкт-Петербургри сервиспа экономика патшалăх университечĕ пуçарнипе ăнăçлăн ĕçлет. Кăçал конкурса Сочире иртнĕ Олимпиадăпа çыхăнтарнă.

– Конкурс йĕркисене пăхса тухнă хыççăн "Спорт пирки чи лайăх материал" номинацие хутшăнма ярса патăмăр. Тĕрĕссипе, кун пирки манса та кайнăччĕ. Вăхăт иртсен сайта кĕтĕмĕр те хамăр шкул призерсен шутĕнче пулнине куртăмăр, – йăл кулать "Шкул калемĕ" кружок ертӳçи.

"Шкул хыпарĕсем" хаçат номерĕсене кашни çулах тĕрлĕ конкурса ярса панă кружок ăстисем. Çуллен Çĕнĕ Шупашкар хаçачĕ йĕркеленĕ конкурса хутшăнма тăрăшнă. "Нева калемĕ" конкурсра Комсомольскинчи 1-мĕш шкул хаçачĕ иккĕмĕш вырăна тухни пурне те тĕлĕнтернĕ те, савăнтарнă та.

– Çĕнтерӳçĕсен йышĕнче ытларах хула шкулĕнче вĕренекенсем тата вĕсен хаçачĕсем. Конкурса уйрăмах Курск облаçĕнче, Крымра пурăнакансем хастар хутшăннă. Урăх çĕр-шыв çыннисем те, сăмахран, Латвирен кăмăл тунисем те пурччĕ. Паллах, кун йышши конкурсра хутшăнса иккĕмĕш вырăн йышăнма пултарни – пысăк чыс, – çирĕплетет Владимир Геннадьевич Гордеев.

Паллах, шкул чысне Раççей шайĕнче иртнĕ конкурсра çӳллĕ шая çĕклени республикăшăн та хаклă пулăм. "Шкул калемĕ" кружок ĕçченĕсем çак çĕнтерӳпе çеç çырлахасшăн мар-ха. Вĕсем ытти конкурса та хастар хутшăнма тĕллев лартнă. Мал ĕмĕтлĕ кружок ĕçченĕсем çу уйăхĕнче районта шкул хаçачĕсен фестивальне йĕркелесшĕн. Çак пуçарăва администрацире вăй хуракансем те ырланă. "Ытти шкулсем еплерех ĕçленине пĕлес килет. Тен, вĕсенчен вĕренмелли пур. Ачасене пухса тĕрлĕ мастер-класс, пултарулăх ăмăртăвĕ йĕркелесшĕн", – ăнлантарать "Шкул калемĕ" кружок  ертӳçи.

Çак кунсенче Санкт-Петербургра савăнăçлă лару-тăрура çĕнтерӳçĕсене Хисеп хучĕсемпе, хаклă парнесемпе чысланă. Комсомольскинчи 1-мĕш шкул коллективĕ те çак уява хутшăннă.

Комсомольски районĕ,
Комсомольски.

*Ирина КОШКИНА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Елчĕксенчен тĕслĕх илер!

Кĕçĕннисем аслисенчен тĕслĕх илни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Тин кăна пурнăçа хăнăхса пыраканскерсем çав тери çивĕч туйăмлă та, йĕри-тавра мĕн пулса иртнине çийĕнчех евĕрлеме хăтланаççĕ. Ача тĕкĕр пекех-çке. Çавăнпа вăл мĕнле çынсем хушшинче ӳсни унăн кăмăлне, тавра курăмне йĕркеленме май парать. Юнашар кăнттам калаçакансем çеç пулсан пĕчĕкскертен çепĕçлĕх кĕтсе илеймĕн, пурăна киле унăн çак усал енĕ тата вăйланĕ. Кăмăллă пуплеве илтсе ӳсекен вара пурнăçа юратма тата хаклама, кашни çынна хисеплеме вĕренĕ.

Çапларах шухăш патне çитсе тухрăм Елчĕк районĕнчи Елчĕк пуçламăш шкулне кĕрсенех. Кунта кĕçĕннисен патшалăхĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Ачасене сăмах хуш кăна, çурхи пахчари кайăксем пекех чĕвĕлтетме пуçлаççĕ. Вĕсене итленĕ май тăван чĕлхе тата илемлĕрех янăранăн туйăнать. Ку патшалăх ячĕ мĕн тери илĕртӳллĕ тата! «Паха пĕлӳ» – кĕçĕн класс ачисене тарăн пĕлӳ паракан шкул.

## Хастарлăх ачаранах пуçланать



Вĕрентекенĕсем кашни тăхтавра пĕр пӳлĕме пуçтарăнаççĕ те шкул ĕçĕ пирки канашлаççĕ, пĕр-пĕрне кирлĕ сĕнӳпе хавхалантараççĕ. Эпĕ пырса кĕнĕ чухне вĕсем Чăваш чĕлхи кунне епле ирттересси çинчен калаçатчĕç. Пӳлĕмре тараватлăх хуçаланать, вĕрентекенсен кăмăллă сăн-питĕнче ăшă кулă çуталать. Пĕр-пĕрне ăнланса, йывăр вăхăтра пулăшса ĕçлени те çак туслă коллектива ăнăçу кӳрет пуль. Чи асли кунта вăтăр икĕ çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăтамран илсен ытларахăшĕ вун çичĕ çула яхăн çак тивĕçе пурнăçлать. Чи çамрăкки вара, Ольга Витальевна Кузьмина, ку ĕçе кăçал кăна пуçăннă. Ачасене пĕлӳ тĕнчине ертсе кĕме пуçланă та хăй вĕрентекен пулмах çуралнине туйса илнĕ.

Кĕçĕн классенче пĕтĕмĕшле илсен 196 ача вĕренет. Кашни класра икшер ушкăн. Вĕрентекен программăпа кăна ĕçлемест-çке. Вăл ачасемшĕн чун ăшшине хĕрхенмесĕр вĕсенчен пысăк çын тума ĕмĕтленет. Çавăнпа уроксемсĕр пуçне тăтăшах класс сехечĕсем тата тĕрлĕрен уяв та ирттерме тивет. Пĕчĕкскерсен вĕренес туртăмне пысăклатма, вĕсене хавхалантарма вара конкурс-олимпиадăсем самай пулăшаççĕ. Елчĕк ачисем чăнах та хастар. Тăваттăмĕш класри Полина Ефимова литературăна питĕ юратать. Республика шайĕнчи Ăс-хакăл вăййине хутшăнса вăл виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Виççĕмĕш класри Дима Петров вара, ахăртнех, чĕлхеçĕ пулас ĕмĕтлĕ. Чăваш чĕлхи олимпиадинче виççĕмĕш тухнă вăл.

Шупашкарти «Эткер» центр ирттерекен «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурсра Елчĕксем çулсеренех хастарлăх кăтартаççĕ. Кăçал та акă пĕрремĕш «а» класри Настя Архилина виççĕмĕш, пĕрремĕш «б» класри Дарина Чернова иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Виççĕмĕш çул ĕнтĕ кунта «Ташлакан шкул» проект ĕçлет. Ачасем унта эрнере пĕрре çӳреççĕ. С.И. Карамаликова хореограф тăрăшнипе çак ăсталăха çăмăллăнах алла илеççĕ вĕсем. Ташă вăрттăнлăхĕ те пĕчĕккĕн уçăмлансах пырать.

Кашниех хăйĕн кăсăкланăвне кура тĕрлĕрен кружока çӳрет. «Улăп» физкультурăпа спорт комплексĕ пурри те мĕн тери аван! Унта ачасен сывлăхне çирĕплетмелли меслет нумай. Тĕрлĕ хускану тусан, бассейнра ишсен, спорт вăййисенчен пăрănса юлмасан кунтан, чăнах, та улăп пулсах тухăн. Тăваттăмĕш класри Диана Кириллова Çĕнĕ Шупашкарта акватлон енĕпе иртнĕ республика ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăна тухнă. Шăмăршăра вара ишессипе – иккĕмĕш. Районта спортăн çак тĕсĕпе маттур хĕр ачана çитекен пулман: вăл – пĕрремĕш, пĕрле вĕренекен Катя Цыганова вара – иккĕмĕш тухнă.

Искусство шкулĕпе тачă çыхăну тытни ачасен пултарулăхне аталантарма май парать. Юрлас ăсталăхне самаях пысăклатĕç-ха кунтан вĕренсе тухиччен.

Тăваттăмĕш «а» тата «б» классем çу уйăхĕнче кадет класне куçма хатĕрленĕç, ятарлă тест витĕр тухĕç. Çĕнĕ вĕренӳ çулне вара пиллĕкмĕш «к» класра пуçлĕç. Пĕрисен хăвăртрах кадет тумĕ тăхăнас килет пулсан, теприсем вара шикленӳ туйăмне ниепле те çĕнеймеççĕ-ха, çывхарса пыракан тĕрĕслев хăратать вĕсене. «Ачасем, нимĕн кулянмалли те çук. Эсир питĕ маттур, хăвăра шанăр», – тесе хавхалантарать вĕсене Вера Геннадиевна Молоствова класс ертӳçи.

## Эпир, чăвашсем, питĕ маттур!

Акă шăнкăрав янăрарĕ те пуçламăш шкулăн сакăр класĕ те анлă коридорта пуçтарăнма пуçларĕ. Кунта паян Чăваш чĕлхи кунне халалланă уяв иртет-çке. Наци тумĕ тăхăннă хĕр ачасемпе арçын ачасем пукане евĕр курăнаççĕ, куçа тӳрех илĕртеççĕ. «Мĕн лартса парĕç-ши вĕсем паян?» – çапларах шухăш мĕлтлетет пуçра кашни класăн хăйне евĕрлĕхне асăрханă май.

Уява Любовь Николаевна Маркова вĕрентекен уçрĕ. Чăваш чĕлхи кунне паллă тăвасси мĕнпе çыхăннине ăнлантарса пачĕ. «Эпир илемлĕ Чăваш Енре пурăнатпăр, кашни кунах чăвашла сăмах хушатпăр, тăван чĕлхе пире вăй-хăват парать», – терĕ вăл. Ачасем çак ылтăн сăмахсене питĕ тимлĕн итлерĕç, пĕлтерĕшĕ пирки шухăша каякан та пулчĕ. Чăвашсем хушшинчи паллă çынсем çинчен каласа пани вĕсене ĕмĕтленме, пысăк тĕллев лартса ун патне çитме хавхалантарчĕ, ахăртнех. Любовь Николаевна: «Эпир, чăвашсем, питĕ маттур», – тесен ачасен куçĕсем татах та çуталчĕç. Халăх пуласлăхĕ хăйсенчен килнине туяççĕ ĕнтĕ вĕсем.



Ура çине тăрса Чăваш Республикин гимнне шăрантарнă вăхăтра вара кашни ача мăнаçлăн курăнчĕ. Акă пирĕн малашлăх сасси!

Тăваттăмĕш классем куракансене чăваш ташшипе тыткăнларĕç. Хусканăвĕсем çаврăнăçуллă та илемлĕ. Мĕн тери паха-çке пирĕн халăхăмăр пуянлăхĕ! Çакă вăл ташăра та сисĕнет.

Виççĕмĕш класри Настя Архилина хăйне артист пек тытма пултарнипе тĕлĕнтерчĕ. Сасси чуна пырса тивет, пуплевĕ чĕрене ăшăтать, Иван Яковлевич Яковлев çинчен çырнă сăвă йĕркисене чунтан шăрантарнă вăхăтра хĕр ача аллисемпе хăлаçланса илет те акăш евĕр туйăнса каять. Ăсталăхне малашне те аталантарсан, пултарулăхне сӳнме памасан унран пысăк артист пулатех.

Тăваттăмĕш «б» класри Олеся Колсанова та сăвăпа савăнтарчĕ. Тантăшĕсем кăмăллăн алă çупни, вĕрентекенсем ырă сăмахпа хавхалантарни ачасене татах та çунатлантарать, хăйсене лайăх енчен ытларах кăтартма май парать.

Акă тĕрлесе ларакан чĕрĕ «пуканесем» куç тĕлне пулчĕç. Иккĕмĕш «б» класри хĕр ачасем, ав, «Улах ларма» килнĕ иккен. Полина Иванова, сăмахран, тĕрĕ – хăйĕн чун киленĕçĕ пулнине палăртрĕ. Унăн юлташĕсем те çак илем ĕçне кăмăллаççĕ.

Чăвашсем – çĕр пин юрăллă, çĕр пин тĕрĕллĕ халăх тесе ахальтен каламан. Елчĕксем паян та çак сăмахсен пĕлтерĕшне тӳрре кăлараççĕ. «Улахра» ларакансем халăх ĕлĕк-авал вăрттăн çырупа усă курни çинчен каласа пачĕç. Çав паллăсем шăпах тĕрĕсенче сыхланса юлнă. Эппин, пирĕн паянхи тивĕç – халăх ăс-хакăлне пĕтме памасăр малалла аталантарасси. Китай тĕрри çинчен те сăмах пулчĕ кунта. Çапла çав, хамăр халăх кун-çулĕпе тĕплĕнрех паллашас тесен ыттисемпе те кăсăкланмалла, танлаштармалла, пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсем тупмалла.

Ачасене тупмалли юмахсем яланах канăç памаççĕ. Ахальтен мар-çке вĕсем асламăшĕсене тăтăшах: «Татах ыйт-ха. Кăна пĕлетĕпех ĕнтĕ», – тесе тархаслаççĕ. Тупсăмне тупма вара çăмăл та, çав вăхăтрах йывăр та. Чăвашсен вăлтса калаçасси унта та сисĕнет-çке. Ĕлĕкхи юрăсем тата мĕн тери шухăшлă! Унта мĕн çинчен каланине тӳрех тавçăраймăн та. Малтанласа ахаль сăмахсем пек çеç туйăнсан кайран вара вĕсен тарăнлăхĕнчен тĕлĕнсе çитерейменĕ.

Вăйăсем авалах çыннăн ăс-хакăлне те, тавра курăмне те, çаврăнăçулăхне те кăтартса панă. Кам мĕнлерех иккенне пĕлмелли чее мел тесен те юрать çакна. Паянхи ачасем вара аслашшĕ-асламăшĕн пĕчĕк чухнехи вăййисене пĕлеççĕ-ши? Е компьютерпа телевизортан хăпаймаççĕ? Иккĕмĕш «б» класс ачисем мĕн тĕрлĕ вăйă выляса кăтартмарĕç пуль! Кĕтесле те, шăпа ямалла та... Анчах вĕсене шăпăрлансем урама тухсанах манса каймĕç-ши?

«Эпир кулленех ялти тантăшсемпе пуçтарăнса «Сик, кĕтес», «Суккăр така», «Çапса тармалла» тата нумай вăйă вылятпăр», – терĕç мана ачасем эпĕ иккĕленнине кура. Мĕнех, эппин, вĕсен ачалăхĕшĕн кулянмалли çук.

Уяв вĕçленнĕ май вара пурте ура çине тăрса «Илемлĕ» юрă шăрантарчĕç. Чăнах та, чăваш юрри те юрлама пĕлсен кăна илемлĕ пуль çав. Ачасем мĕн тери пултарулла та маттур пулнине кура вара чун савăнать.



## Таçтан хушни кирлĕ мар

«Паллă кунсене эпир çапларах уявлатпăр», – теççĕ вĕрентекенсем кăмăллăн. Илемлĕ тумпа Искусство шкулĕ те, вырăнти музей та пулăшать иккен. Хăшне-пĕрне вара амăшĕсем çĕлесе параççĕ. Пĕрле тачă çыхăну тытса ĕçленине мĕн çиттĕр? Çакна та каласа хăвармалла, чăваш тĕррипе технологи урокĕнче кăна ĕçлемеççĕ, ӳкерӳ тата чĕлхе предмечĕсенче те ун валли ятарлă вăхăт уйăрнă.

«Чăвашлăхшăн тăрăшма пире таçтан хушни кирлĕ мар, чун ыйтни те çителĕклĕ», – теççĕ кунти вĕрентекенсем пĕр саслăн. Чĕлхене те вĕсем ют сăмахсемпе çӳпĕлемеççĕ. Кунта таса чăвашлăх хуçаланать. Республикăри пур ачана та, аслисене те, çакăн пек маттурсенчен тĕслĕх илме сĕнетĕп. Пирĕн чĕлхене чĕвĕлти чĕкеç чĕлхипе танлаштараççĕ. Чĕвĕл-чĕвĕл тунă вăхăтрах курак пек кăшкăракан чĕкеçе курнă-и эсир? Çук, паллах. Эппин, тăван чĕлхемĕр те таса чăвашлах янăратăрччĕ!

***Лариса ПЕТРОВА.***

● "ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ!" КОНКУРС

# Мăн Чураш кун-çулĕ

Тăван кĕтесĕн çутă та таса туйăмĕ кашни çын чĕринче пуранать. Кирек ăçта кайсан та атте-анне килĕ асăмра. Çак юрату чылай вăхăт иртсен те çухалмĕ.

Эпĕ Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашра пурăнатăп. Тăван ялăн историне Владимир Николаевич Черлаков ял пуçлăхĕ каласа пачĕ...

Мăн Чураш. Патшалăх документенчĕсенче çак ят чи малтан 1737 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче тĕл пулнă. Ун çинчен Етĕрне уесĕнчи Сормово вулăсĕнчи канцелярие ĕç хутĕнче вулама пулать: "31 марта 1773 года Ядринского уезда Сорминской волости деревни Чурашево чувашанин Баландай Танчишев дал живую запись канцеляристу Ядринской канцелярии Демяшеву в том, что занял у него на погашение подушных семь рублей и отдал в работу сына своего Вурманчу на 10 лет, чтобы он работал неленностью и не сбежал, подушные за Вурманчу платить Демяшеву. Пошлина двадцать три копейки". (ЧНИИ архивĕ, 1-мĕш уйрăм, управ единици – 548, инвентарь – 6095).

Мăн Чураш ялĕн пуçламăш тапхăрне çак вăхăтран илмелле. Çак тăрăха чи малтан тĕне кĕмен Чураш ятлă çын куçса килнĕ. Унран ял ячĕ пулса кайнă. Чураш пурăннă çĕрте вăрманлă, шурлăхлă пулнă. Штранка юхан шыв Вылана юхса кĕнĕ, кайран Сăрпа пĕрлешнĕ. Паян кун та Штранка хĕрринче çĕр айĕнчен тупăннă йывăç вуллисене курма пулать. Мăн Чурашран инçе мар Иван уйĕ. Ваттисем каланă тăрăх, кунта Хаяр Иван патша çарĕ Хусан хулине кайнă чухне канма чарăннă. 80-100 çул каялла çак уйра суха тунă чухне чылай хресчен авалхи уххăн тимĕр тăррисене, кăкăр çине çакмалли пĕчĕк турăшсене, çар тумтирĕн ытти япалисене, пăхăр укçасене те сахал мар тупнă. Хальхи вăхăтра вĕсем Мăн Чураш шкулĕнчи краеведени музейĕнче упранаççĕ.

Республикăра Чураш ятлă ялсем татах та пур: Йĕпреç тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче. Етĕрне районĕнчи пирĕн ялсăр пуçне тепĕр Чураш пур. Ялĕ пысăках пулнăран ăна Пĕчĕк Чураш е урăхла Вырăс Чураш теççĕ.

Чураш çĕр обществин Çĕмĕрле районĕнчи Чăваш Улхаш тăрăхĕнче те çĕр лаптăкĕсем пулнă. Паянхи кун та çак уйсене "Чураш çĕрĕсем" теççĕ.

Чăвашра ялсем йĕркеленме пуçлани вырăс патшалăхĕ чăвашсене вăйпа православи тĕнне йышăнтарма тытăннипе те çыхăннă пулас. Çак тĕлĕшпе вырăс патшалăхĕ "Çĕнĕ тĕн" кантурĕсене те уçнă. Патша указĕпе Христос тĕнне йышăннисене вицĕ çуллăха налукран хăтарнă. Хĕсĕрленине чăтаймасăр, язычниксем хăйсен тĕнне хутĕлесе хăварас тесе çынсем чăтлăхсене тарса пытаннă. Çавсен шутĕнче Чураш ятлă çын та пулнă. Пирĕн тăрăхри çырма-çатра ячĕсем те тĕне кĕмен ятсенчен пулса кайнă: Мамарлан, Вушмаш, Юрпаш юхан шывсем, Сăкăт, Атяр варĕсем, Савиншур, Чутулăх, Нукашни улăхсем...

Чураш ял çыннисем те хăйсен пурнăçне упраса хăвармашкăн ирĕксĕрех православи тĕнне йышăннă. Чылай чухне чăтаймасăр хăйсем çине алă хунă тĕслĕх те йышлă пулнă. Гурий Комиссаров чăвашра суицид анлă сарăлнă пулнине çырать. Ара, чăваш халăхĕ пек хĕн-хур, асап кам чăтнă-ши?

Темле чăтăмăн та вицĕ пур. Çилли тулса çитнипе Чураш ял çыннисем Емельян Пугачев пăлхавне хутшăнни çинчен халăх сăмахлăхĕнче те çырнă. Вĕсем Степан Разин пăлхавне те хутшăнни çинчен çырни те упранса юлнă. 1842 çулхи "Çĕр улми пăлхавĕнче" чурашсем хăйсен ялĕнче Хусантан пăлхава путарма янă хĕç-пăшаллă салтаксемпе тытăçнă. Сакăр хресчен вĕлернĕ, хĕрĕх улттăшĕ йывăр суранланнăран вилнĕ, ик çĕр вăтăр çын сусăр юлнă, тăват çĕр çирĕм çына судпа айăпланă, нумайăшне Çĕпĕре янă.

Чураш ялĕ ĕлĕкех ăста çынсемпе паллă пулнă. Анат Карташ урамĕнчи Тир Иванне таврара аван пĕлнĕ. Василий Тимофеев çăм атă йăваланă, атăçă ĕçне пĕлнĕ, Турай пасарĕнче Чураш ăстисен çăпатисене ырланă. Михаил Эльми, Потапов Якку, Павел Кудряшов платниксем таврара ырă ятпа çӳренĕ. Тен, çавăнпа Чураш ялĕнче капмар çуртсем чылай пулнă. Тăмран чӳлмек тăвассипе Димитрий Козловпа Михаил Эльми палăрнă. Столярсенчен Антон Николаевпа Николай Козлова, тимĕрçĕсенчен лашасене таканланă Марка, художниксенчен турăшсене ӳкернĕ Даниил Захарова палăртмалла.

Ялта вицçĕ лавкка пулнă. Вĕсем чиркӳ лапамĕнче ларнă. Хуçисем: Эльми, Михаил Рами, Владимир Немцов. Эрне кун Чураша мĕн пур тавраран пасара пухăннă. Пасар хуçи Яков Дмитриев пулнă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Чураш çыннисем пăлханма пуçланă. Вырăнти влаç куяла харсăр ялсен шутне кĕртсе уретник çирĕплетеççĕ. Крылов уретник пуян çынсем патĕнче пурăннă. Вăл Йăлăм урамне трахомпа чахотка чирĕсем сарăлнăран тухса çӳреме хăранă. Çак вăхăтра çынсем вырса вилес мар тесе Тобольск кĕпĕрнине куçса кайнă тĕслĕх чылай пулнă. Ертсе каяканни Птихвар пулнă. Халĕ вăл йĕркеленĕ ял Омск облаçĕнчи Екатерински районĕнчи Ермаково шутланса тăрать.

1884 çулхи кăрлач уйăхĕн 29-мĕшĕнче Чурашра пуçламăш шкул уçăлать. Малтанхи вĕренекенсен шутĕнче 37 арçын ача пулнă. Вĕренме тăхăр çултан йышăннă. 1898 çулта иккĕмĕш сыпăклă шкул хута каять. Ун çумĕнче чиркӳ прихучĕн кăтартуллă шкулĕ те уçăлнă. Вĕрентекенĕ – Алексей Филарретьевич Троицкий псаломщик. Шкулсене уçакане тата тытса пыраканĕ чиркӳ священникĕ Алексей Александрович Ляпидовский пулнă. Каласа хăвармалла: унăн кинĕ Светлана Михайловна Ляпидовская тата вун вицçĕмĕш ывăлĕ Александр Алексеевич Ляпидовский чăвашран тухнă паллă профессорсем. Кунтах земствăн пуçламăш шкулĕ те, учительсем хатĕрлекен семинари те уçăлнă. Мăн Чураш шкулĕнчен нумай паллă çын вĕренсе тухнă. Çак шутра Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев председатель, Чăваш Республикин ĕç тăвакан комитечĕн пĕрремĕш председателĕ Иван Илларионов, велоспорт енĕпе тĕнче чемпионĕ Вениамин Григорьев, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Зинаида Прокопьева...

Паян Мăн Чураш ялĕ çĕнелсе улшăнчĕ. Вăл Етĕрне районĕнчи чи пысăк ял. Кунта 225 кил хуçалăх, 426 çын пурăнать. Пĕлтĕр ялта вун тăватă ача çуралнă. Эппин, ялăн малашлăхĕ куç кĕретех.

***Оля ВЛАДИМИРОВА,***
***9 класс.***

Етĕрне районĕ,
Мăн Чураш ялĕ.

ХАСТАРСЕМ

# Маттур тимуровецсем



Куславкка районĕнчи Куснар шкулĕнче вĕренекен çиччĕмĕш классем питĕ туслă та ĕçчен. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем пурте Тимур командине çыраннă. Çынсене çăмăллăх кӳресси – ачасен тĕп тĕллевĕ. Ялти ватăсене урай çуса, шыв йăтса, юр хырса пулăшма ытти ĕçе те пурнăçлама яланах хатĕр маттурсем. Вĕсемех çывăхри Ахти вар вăрманне çӳп-çапран тасатаççĕ, ялти вăрçăра пуç хунисене асăнса лартнă палăк йĕри-тавраштне те тирпейлесе-пăхса тăраççĕ.

– Каникулта та пирĕн çиччĕмĕшсем ахаль лармаççĕ. Тĕрлĕ ĕçре вăй хурса вак-тĕвек туянмалăх укçа-тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Питĕ тăрăшуллă та ĕçчен вĕсем, – кăмăлтан ырлать ачасене вĕсен ертӳçи Надежда Витальевна Самсонова та.

Хăйсене тĕрлĕ енлĕн аталантарма хăнăхнăскерсем пĕрре те ахаль лармаççĕ. Дима Мослов, Боря Казякин, Максим Гаврилов, Леша Варягин тата Максим Есин шкулти мини-футбол командинче выляççĕ. Акă нумай пулмасть Куснар команди районти ăмăртура та иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Халĕ вĕсем малтисен йышне кĕме хатĕрленеççĕ, тренировкăсем irттереççĕ.

– Тепĕр ăмăртуран пĕрремĕш вырăн илсех таврăнăпăр ак, – тет хăпартланса футбол ушкăнĕн капитанĕ Леша Варягин. – Хамăр тăрăшсан çĕнтеретпĕрех.

– Вăл пирĕн – чи лайăх капитан! – хавхаланулăн пĕлтереççĕ арçын ачасем. – Яланах сĕнӳ-канашпа пулăшать, вăйăра мĕнле тактикăпа стратеги суйламаллине ăнлантарать. Кашни команда хăйне майлă вылять-çке, пирĕн те вĕсенчен юлмалла мар, – теççĕ хастарсем пĕрре пӳлсе.

Кунсăр пуçне Лешăпа Максим Есин волейбол секцине çӳреме те вăхăт тупаççĕ. Унта та кунта та ĕлкĕреççĕ. Максим вара баянпа та калама вĕренет, шкулти музыка кружокне çӳресе ăсталăхне туптать.

Дима та хăйне пур енлĕн тĕрĕслесе пăхасшăн ăнталать. Вăл "Çамрăк физик" кружока çӳрет. Ахаль тата хытă хутпа йывăçран самолет, карап, робот, автомашина моделĕсене ăсталать. Таçта та пултарулăхпа палăракан çиччĕмĕшсем малашне те алă усса ларманнине çирĕплетсех пĕлтерчĕç.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Куславкка районĕ,
Куснар шкулĕ.

# «Шевле» ачисем

Пĕррехинче Шупашкарти 11-мĕш шкула телевидени ĕçченĕ Марина Карягина «Шевле» ӳкерме пынă. Пĕр класра вĕренекенсене – Александр Абдулова, Кирилл Майорова тата Анастасия Ивановăна чăвашла лайăх калаçнине кура хăй патне передача ертсе пыма йыхравланă. «Шухăшласа пăхăр та кайран кун пирки мана пĕлтерĕр», – тесе хăварнă Марина Карягина хастарсене. Çакăн хыççăн чылайччен шухăша кайса çӳренĕ çамрăксем. «Эпĕ каятăп, мана телеертӳçĕ пулма килĕшет», – тенĕ пĕр кунхине Настя Иванова. «Манăн та çитсе пăхмалла пуль. Хамăн пултарулăха тĕрĕслесе пăхсан никам та вăрçас çук», – калаçăва хутшăннă Кирилл Майоров. «Эпĕ те сирĕнтен юлмастăп. Чăн та, мĕншĕн ытлашши нумай пуç ватса çӳремелле-ха?» – хăпартланнă Саша Абдулов та.
Паян çиччĕмĕш класра вĕренекен виçĕ тус «Шевле» передача ертсе пынă çĕрте вăй хурать. «Питĕ килĕшет унта пире», – теççĕ мал ĕмĕтлĕскерсем.

## Пулас художник



Виççĕрех ташă кружокне çӳреме тытăннă Настьăн паян та пĕр пушă вăхăт çук.

– Апла пулин те «Шевле» передача валли вăхăт тупатăп. Аннепе атте манăн чăн-чăвашсем вĕт-ха. Анне, Надежда Геннадьевна, Канаш районĕнчи Çеçпĕлтен. Атте, Валерий Григорьевич, Муркаш районĕнчи Хорнуйран. Кукамайпа кукаçи е асаттепе асанне ялне кайсан мана палласа илеççĕ. «Эпир сана сенкер экранпа час-час куратпăр, маттур», – тесе хавхалантараççĕ те, пушшех хăпартланатăп. Малашне тата тăрăшарах ĕçлес хăват самантрах тупăнать. Е тата анне Çеçпĕл ялĕнче çуралса ӳснĕрен-ши, Çеçпĕл сăввисене вулама питĕ юрататăп. Ăна халалланă музейра та пĕрре мар пулнă, ун çинчен çырнă материалсемпе, сăн ӳкерчĕкĕсемпе те хаваспах паллашнă. Ахăртнех Çеçпĕлех хăват парать мана, хам та сăвă шăрçалама кăмăллатăп. Çак ĕçре мана чăваш чĕлхине вĕрентекенĕ Любовь Васильевна Иванова пулăшса хавхалантарса тăрать. Çитменлĕхсене тупса палăртать, вара иксĕмĕр çĕнĕ те хитре йĕркесем шухăшласа тупатпăр самантрах. Пысăк тав сăмахĕ калатăп хамăн юратнă вĕрентекенĕме, – тет Настя хăпартланса.

Ӳнер шкулне те çӳрет вăл. Çав тери хитре ӳкерет. Уйрăмах шурă хут çине çут çанталăк илемне куçарма кăмăллать. Тĕрлĕ конкурса хутшăнса пĕрре мар çĕнтерӳçĕ ята çĕнсе илнĕ.

– Манăн питĕ художник пулас килет. Хамăн чаплă ĕçсене такама та парнеленĕ пулăттăм çеç мар, сутнă та пулăттăм. Ют çĕр-шыва та тухса çӳрес килет, – тет Настя хăй шухăшĕпе паллаштарнă май.

## Историе кăсăкланакан

Пур предметпа та «пиллĕк» паллăпа кăна вĕренекен Кирилл Майоров – хастар спортсмен. Футболла выляма çав тери юратать. Çавăнпа «Спартак» стадиона хаваспах çӳрет вăл.

– Юратнă футболист та пур манăн. Вăл – Зидан. Ун çинчен йăлтах пĕлетĕп эпĕ. Вăл ăçта çуралса ӳснирен пуçласа епле ӳсĕмсем туни таранах. Манăн та француз çамрăкĕ пекех тĕнчипе паллă футболист пулас килет. Хам тăрăшсан, Валентин Валентинович Ванин тренер пулăшса хавхалантарсан – мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕретех ĕнтĕ. Ун чухне вара мана сенкер экранпа кăтартĕç, хаçатра çырĕç, – ĕмĕтленет Кирилл.

Историпе географи енĕпе çыхăннă ыйтусене класра унран лайăх хуравлакан та çук. Ахальтен мар. Унăн ашшĕ, Андрей Михайлович, историк. Çавăнпа ачине те çак предметсемпе уйрăмах вайлă хатĕрлет.

– Мĕн ас тăвассах, çуралнă кунсенче атте ача-пăча кĕнеки мар, истори кĕнеки парнелетчĕ. Çакă мана питĕ килĕшетчĕ. Вулама юратнăран унăн парнине пĕр-икĕ каçрах вуласа тухни те пулнă, – тет арçын ача кăмăллăн.

Халĕ вăл çуллахи каникула чăтăмсăррăн кĕтет. Ара, Комсомольски тăрăхĕнчи кукамăшĕпе кукашшĕ патне каясшăн-çке вăл.

– Пулла çӳреме юрататăп. Çавăнпа маларах кайса вăлтасене тĕрĕслемелле. Юсавлах-и вĕсем. Кам пĕлет, тен, хĕл касичченч йĕппи ăнсăртран хуçăлнă е лески татăлнă. Эх, çиттĕрччĕ хăвăртрах çулла! Пулăран тутлă шӳрпе пĕçерсе çиесчĕ! Типĕтмелĕх те, ăшаламалăх та тытăп-ха янтă япалана. Кушаксене валли кучченеçлĕх те тăвасчĕ, – çаплипех ĕмĕтленет арçын ача.

...Акă тенкел çине ларчĕ те куçĕ умне çуллахи илемлĕ кунсем тухса тăчĕç. Сарайĕнчи вăлтисене илчĕ те улăх тăрăх пĕве еннелле васкарĕ. Утассипе ăмăртакан спортсмен пекех курăнчĕ вăл.

Çук, утрĕ те мар, чупрĕ вăл... Чунĕ васкать, чĕри васкать, алли васкать. Ури çеç вĕсемпе тан ĕлкĕрсе пыраймасть. Хăш-пĕр тĕлте шăва-шăва каять, ланкашкасем умĕнче такăнать.

Хĕвел тухасси инçе-ха. Çăлтăрсем те сӳнсе пĕтмен. Пĕве хĕрринче шапасем авă тапхăр-тапхăр квак! квак! тесе кăшкăрса илеççĕ.

Вăлта йĕппи çине ăман тирчĕ те ăна шыва пăрахрĕ. Акă умлă хыçлăнах пысăк карас туртса кăларчĕ вăл. «Паян çатмара ăшалăп сире», – кăмăллăн хăйпе хăй калаçрĕ Кирилл.

...Тенкел çинчен ялтах сиксе тăчĕ арçын ача. Чӳрече патне чупса пычĕ те хавассăн кăшкăрса ячĕ.

– Паян та хитре хĕвел пăхать! Эс, хĕвелĕм, каникулта та пире савăнтарсах тăрсам, – терĕ кăмăллăн çеç.

## Ялшăн тунсăхлать вăл



– Эх, унччен фантастикăлла калавсем çырма ăстаччĕ эпĕ. Çапла утса çӳренĕ чухнех «çуралатчĕç» манăн вĕсем. Халĕ, куçăхтарчĕç ахăртнех, пулмасть. Тем пек тăрăшсан та урăх нимĕн те шăрçалаймастăп. Пуçри фантази «пӳлĕмне» çил-тăвăл вĕçтерсе кайрĕ пулмалла. Чăваш чĕлхине вĕрентекен Любовь Васильевна та пĕрре мар çĕнĕрен алла ручка тытмалли пирки асăрхаттарчĕ. «Саша, хăвна алла ил те вулакан валли хитре калавсем çырма пуçăн», – терĕ. Çук, темшĕн паянхи кунччен те унăн сăмахĕсене ăша хывса çитерейместĕп, – тет Саша Абдулов.

Саша Канаш тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ. Çиччĕ тултаричен ялта кун-кунланă вăл. Кайран тĕрлĕ сăлтава пула Шупашкара амăшĕн аппăшĕ патне пурăнма куçса кайнă.



– Ялшăн питĕ тунсăхлатăп. Кукамай та хĕл каçма хулана килет. Вăл та яланах çуллахи куна кĕтет. Каникулта вара иккĕн тăван тăрăха каятпăр. Ĕçĕ тем чухлех унта. Пахча çимĕçе çум курăкран тасатмалла, шăвармалла, çĕрĕсене кăпкалатмалла. Çавăн пекех кукамая апат пĕçерме пулăшатăп. Уйрăмах эпир борщ çиме юрататпăр. Çавăнпа хĕрлĕ кăшманне те нумайрах лартма тăрăшатпăр. Çапах та эпĕ пушă вăхăт тупса пулла каятăпах. Кукамай та: «Атя, çитсе кил ĕнтĕ. Эпĕ унччен çатмана хĕртсе хуратăп пулă ăшалама», – тет. Ах, вăл енĕпе кашни кунĕ телейлĕ мар çав. Хăш чухне вăлтана пулă хыççăн пулă çакланса кăмăла хăпартлантарать. Тепĕр чух киле пушă витрепе таврăнни те пулкалать. Вара кушаксен кăмăлĕ те хуçăлать, ман еннелле ытти кунсенчи пек ăшшăн пăхмаççĕ, – тет Саша.

Биологи предметне юратакан Саша çут çанталăка кăмăллать. Çавăнпа урамра çӳресси уншăн чун иленĕçĕ.

Шупашкар,
11-мĕш шкул.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Юмахпа савăнтарчĕç

*Вăрмар районĕнчи Карăкçырми садикĕнче чăваш халăхĕн çулталăкри чи сумлă уявĕсене палăртасси йăлана кĕчĕ. Акă темиçе уйăх каялла улах лартăмăр, нумаях пулмасть Мăн куна паллă турăмăр.*

*Çак кунсенче çамрăк артистсем ашшĕ-амăшне тата ял халăхне «Ылтăн çăмарта» юмах курма йыхравларĕç. Карчăкпа старик (Пысăк Енккасси шкулĕнче вĕренекенсем Лариса Павловăпа Мария Дмитриева) ачасене хавассăн кĕтсе илчĕç, пылак çимĕçсемпе сăйларĕç. Пĕчĕк пикесемпе яшсем ватăсене тав турĕç: вĕсене илемлĕ юрă-ташăпа, тĕрлĕ вăйăпа савăнтарчĕç.*

***Надежда АЛЕКСАНДРОВА, Ирина ЛЬВОВА, воспитательсем.***



# Чăвашлăх уявĕн эрни

**Ака уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн шкулта Чăваш чĕлхипе литератури эрни иртрĕ.**

Вăл **тунти кун** пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем савăнăçлă линейкăра лартса панă «Тăван чĕлхем – таса хĕлхем» литературăпа музыка композицийĕнчен пуçланчĕ. Чăваш тумĕллĕ маттур ачасем аттеанне пилленĕ чĕлхене юратса, хисеплесе, упраса пурăнмалли çинчен хавхаланса сăвă вуларĕç. Лида Храмовăпа Александра Шавикова чăвашла çепĕç юрă шăрантарчĕç. Уроксем хыççăн вара саккăрмĕшсемпе тăххăрмĕшсем кăсăклă çул çӳреве тухрĕç. Çамрăк чĕлхеçĕсем «Пуплев пайĕсем», «Ваттисен сăмахĕсем», «Тĕрĕс куçар», «Шӳтлĕ ыйтусем», «Чĕлхе наукин пайĕсем» станцисенче чарăнчĕç, тĕрлĕрен ыйтăва хуравларĕç. Ку экскурси-вăйăра туслăх çĕнтерчĕ.

Ытти классенче те ĕçлĕ шав хуçаланчĕ. Пĕрисем Анна Козлова вĕрентекен ертсе пынипе хаçат кăларчĕç, теприсем Нина Тихонова вĕрентекен патне юрлама васкарĕç...

**Ытлари кун** та кичем пулмарĕ ачасене. Чăваш чĕлхипе литератури урокĕсене вĕрентекенсем ытти чухнехинчен кăсăклăрах ирттерме тăрăшрĕç. Ачасем И.Я. Яковлева халалланă «Чăваш Улăпĕ» тата «Пирĕн ентешсем» хаçатсемпе паллашрĕç. «Мăн кун çăмарти» экспонатсен куравĕ те ĕçлеме пуçларĕ. Хатĕрленӳ ушкăнне çӳрекен пилĕк çулти Артем Тихонов, виççĕмĕш класри Рома Павлов, саккăрмĕшĕнчи Коля Белов, вуннăмĕшĕнчи Ирина Анисимова ĕçĕсем питĕ илĕртӳллĕ.

Вун пĕрмĕш класра вĕренекенсем «Чăваш çыравçисене кам лайăхрах пĕлет?» викторинăра тупăшрĕç. Вăтăр балл пухса Мария Макаровăпа Алина Кузьмичева мала тухрĕç. Анатолий Чебоксаров иккĕмĕш вырăнта, виççĕмĕшне Кольăпа Василий Тукмаковсем пайларĕç.

**Юн кун** ачасен пĕр ушкăнĕ районти «Сарпи вулавĕсем» конкурса хутшăнма кайрĕ. Пиллĕкмĕш класри Ксения Чернова вара 5-8 класс ачисем хушшинче Р.Сарпи сăввине вуласа пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ, саккăрмĕшĕнчи Даша Ивановăпа тăххăрмĕшĕнчи Люба Мешкова – виççĕмĕш вырăнта. Вуннăмĕш класри Мария Козловăпа Валентина Соснова вара Сарпи сăвви тăрăх Анатолий Никитин кĕвĕленĕ «Чăваш Ен» юрăпа виççĕмĕш вырăна тухма пултарчĕç.

Уроксем вĕçленессе чăтăмсăррăн кĕтнĕ улттăмĕшпе çиччĕмĕш классем «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» хаваслисемпе тавçăруллисен конкурсĕнче тĕл пулчĕç. Вуннăмĕш класра вĕренекен Раиса Никитинăпа Анюта Выросова ертсе пыракансем тĕрлĕ тĕрĕслев витĕр кăларчĕç вĕсене. Улттăмĕшсем маттуртарах пулни палăрчĕ.

Конкурс хыççăн вуннăмĕш класс ачисем Федор Павлов çырнă «Ялта» драмăн сыпăкĕсене выляса пачĕç. Елюкпа Ванюк сăнарĕсене Анюта Выросова тата Василий Реймов калăпларĕç. Çавăн пекех Ульяна Платонова, Раиса Никитина, Владимир Козлов, Станислав Хомуткин тата ыттисем те хăйсен ролĕсене ăста вылярĕç, чăн-чăн артист пекех.

**Кĕçнерни кун** 3-4-мĕш класра вĕренекенсем районти Культурăпа кану центрĕнче Шупашкар артисчĕсем лартнă «Пӳрнескепе унăн тусĕсем» юмаха курса савăнчĕç. Спектакль хыççăн вĕрентекенсем ачасемпе калаçу та ирттерчĕç.

Культура çулталăкне тата Чăваш чĕлхи кунне халалланă «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2014» акцие те шкул хапăлласах хутшăнчĕ. Чăваш Ен наци радиовĕн 72.41 УКВ хумĕсем çинче диктант текстне вулама пуçласса ачасемпе вĕрентекенсем чăтăмсăр кĕтрĕç. Хамăр ентеш Марина Карягина çырнă текстра мĕн çинчен калани те, ăна Лидия Кузьмина уçăмлă, чуна витермелле вулани те кăмăла кайрĕ. Автор чĕнĕвне шута илсе пирĕн ачасем малашлăха çул тупма пулăшакан вăрттăнлăхсене уçма хатĕррине пĕлтерчĕç. Тепĕр çул диктанта тата пысăкрах йышпа çырма шухăшларĕç.

Уроксем хыççăн «Чăваш пики» илемпе пултарулăх конкурсĕ иртрĕ. 8-11-мĕш класс пикисем хутшăнчĕç унта, малтанах хăйсемпе паллаштарчĕç. Куракансене «Вăрăм çивĕт» конкурс та питĕ килĕшрĕ. «Çивĕч ăслă пике» конкурсра хĕр ачасем чăваш чĕлхипе, литературипе, тăван ен культурипе, историйĕпе çыхăннă ыйтусем çине хуравларĕç. Кашниех чăваш апат-çимĕçĕпе сăйларĕ. Уйрăмах чăкăтпа хуплăва килĕштернĕ хĕрсем. Пултарулăх конкурсĕнче вара пĕри тепринчен маттуртарах. «Чи хӳхĕм пике» ята çĕнсе илнĕ, кăçал шкул пĕтерме хатĕрленекен Алина Кузьмичева ташлама ăста. Саккăрмĕш класри тепĕр Алина Кузьмичева, «Чи çепĕç пике» номинацире çĕнтернĕскер, юрлама юратать. Вуннăмĕш класс хĕрĕ Мария Козлова «Чи тавра курăмлă пике» ята тивĕçрĕ. Вăл гитара калама ăста, çак конкурсра та куракансене илемлĕ юрă парнелерĕ. Жюри тăххăрмĕш класра вĕренекен Люба Мешкова «Чăваш пики-2014» ята çĕнсе илнине пĕлтерсен пурте хыттăн алă çупрĕç. Конкурсра Люба хăйĕн юратнă поэчĕн Г.Айхин сăввине чуна пырса тивмелле вуларĕ. Конкурс вĕçленсен тăххăрмĕш класри Настя Куртмина та хăй çырнă сăввипе паллаштарчĕ.

**Эрне кун** шкулта питĕ пысăк уяв кĕрлерĕ. Пур класс та Культура çулталăкне халалланă концерта хастар хутшăнчĕ. Нина Тихонова музыка вĕрентекенĕ, класс ертӳçисем ĕçлени харама кайман. Çамрăк артистсем юрлама та, акăш пек шума та, сăвă вулама та, шӳтлеме те, кĕвĕ инструменчĕпе калама та – темĕн тума та пĕлеççĕ.

**Шăмат кун** вара шкулта «Калăм – каялла, Мăн кун – малалла» йăла-йĕрке уявĕ хуçаланчĕ. Столовăйра та ачасем çĕр улми нимĕрĕпе тунă тутлă пӳремечпе, çăмартапа, ытти пылак çимĕçпе сăйланчĕç.

Эрне тăршшĕпех «Савнă енĕм – Чăваш Ен» викторина ыйтăвĕсене хуравлама та вăхăт тупрĕç ачасем. Уйрăмах улттăмĕш, çиччĕмĕш, тăххăрмĕш классем хастар пулнине палăртмалла. Чи нумай балл пухаканни вара – улттăмĕш класра вĕренекен Ольга Гордеева. Иккĕмĕш вырăна çав класрах вĕренекен Таня Васильевăпа пиллĕкмĕшĕнчи Сергей Мешков тухрĕç, виççĕмĕшĕнче – вуннăмĕш класри Мария Козловăпа улттăмĕшĕнчи Сергей Кондратьев.

Çавăн пекех çиччĕмĕш класра Анна Козлова вĕрентекен «Çăлтăр сехечĕ» вăйă урокĕ, улттăмĕш класра «Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи» викторина урок ирттерчĕ.

Кăсăклă та пуян иртрĕ эрне. Мероприятисене çӳллĕ шайра йĕркеленĕшĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсемпе класс ертӳçисене тав.

***Светлана НИКИТИНА.***

Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Тавах сире, ветерансем!

### Анне чĕри

Каçар мана, ывăл, каçар, упраймарăм.
Вăрçа тухса кайрăн, пĕтерчĕç сана.
Каçар мана, ывăл, телей тупаймарăн,
Килетĕн кашни тĕлĕкрех ман пата.
Калатăн: «Анне, эс мĕнле пурăнатăн?
Эп таврăнаймарăм... Пĕтерчĕ тăшман.
Анне, эп туятăп, эс халь макăратăн.
Ан макăр, анне, ывăлна эс ан ман...»
Епле-ха манатăп сана, çут хĕвелĕм?
Пĕртен-пĕр ача пулнă. Çук, халь те пур.
Эс чĕрĕ, вилмен. Вĕсене ĕненмерĕм.
Часах ак çитетĕн хастар та маттур,
Кĕретĕн киле, мана ыталатăн,
«Анне, вăрçă пĕтрĕ!» – тесе кăшкăратăн.
Ларса юнашар нумайччен калаçатăн,
Манпа ĕмĕрех савăнса пурăнатăн...
Тват çул иртсе кайрĕ. Пĕрех эпĕ кĕтрĕм.
Яла таврăнаççĕ хастар салтаксем.
Ăçта манăн ывăл? Чăнах-ши эс пĕтрĕн?
Çук, çук, ĕненместĕп, суяççĕ вĕсем!
Ман ывăл вилмен! Ман ывăлăм – чĕрĕ!
Чĕри тапмасан та вăл ман чĕрере!
Кашни çемьере хаяр вăрçă йĕрĕ,
Пĕччен, тăлăха вăл хăварчĕ пире.
Ванюк вил тăпри ăçтине те пĕлместĕп.
Килмерĕ киле, пур пĕр шанăç пĕтмест.
Тен, таврăнĕ-ха? Акă халь, килсе çитĕ?
Анчах та пĕлетĕп, текех вăл килмест.
Калаçмăпăр урăх... Вĕлерчĕç, пĕтерчĕç!
Ăçта манăн ывăл? Ăçта эс, Ванюк?
Усал хыпара кайăксем те пĕлтерчĕç,
Хуйха систерсе авăтать-çке куккук.
Улт çул иртсе кайрĕ. Текех пурнăмарĕ.
Ял-йышĕ ăна пытарчĕ хĕлле.
«Каçар мана, ывăл, каçар, упраймарăм.
Халь пулăпăр иксĕмĕр ĕмĕр пĕрле».

***Диана МОИСЕЕВА.***
Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.

### Çамрăклăха вăрланă

Ĕнер кăна хаваслă яшлăх.
Чупаттăр улăхра çарран.
Анчах тăшман кӳрен хăрушлăх
Хупларĕ çĕр-шыва паян.

Хĕрсем-яшсем янраттарса
Тек юрлас çук çак самантра.
Вĕсем алла пăшал тытса
Халь çапăçаççĕ вăрçăра.

Килтисемпе сыв пуллашса
Чĕрех килмешкĕн шантараççĕ.
Мĕн пур йывăрлăха чăтса
Тумлам куççуль те кăлармаççĕ.

Анчах та амăшĕн чĕри
Ниме пăхмасăр ыратать,
Куççулĕ те ытла вĕри.
Хĕрне вăрçа вăл ăсатать.

– Ах, хĕрĕм, шăпчăкăм эс ман!
Хаяр хурчка пекех тăшман.
Юлсан эс вăрçă хирĕнче
Пит тăвăр пулĕ çак тĕнче.

– Анне, ан чар, пĕрех каятăп.
Тăшман тăван çĕре таптать.
Килте чăтса эп лараймастăп,
Вăрçа ман чунăм талпăнать.

Юлташăмсем пусне хураççĕ
Хăрушă вăрçă хирĕнче.
Вĕри юнне вĕсем тăкаççĕ –
Мир пултăр пирĕн çĕр çинче!

– Ах, хĕрĕм, саншăн кĕл тăватăп,
Шанса тăратăп килессе.
Çак турă та сана сыхлатăр!
Эс таврăн тăван кĕтесе...

Çак вăрçă яшлăха тĕп тунă,
Çапах çынсем пусне усман.
Тăван çĕр-шывшăн çирĕп тăнă –
Тинех-çке парăннă тăшман.

***Виолетта АНИФЕРОВА,***
***10 класс.***
Çĕрпӳ районĕ,
Опытнăй шкулĕ.



Юля АНИСИМОВА (Çĕнĕ Шупашкар, 47-мĕш ача сачĕ) ӳкерчĕкĕ.

### Яланлăхах асра

Эпĕ пулнă вăрçăра.
Вăл – яланлăхах асра.
Пушарла хĕвел ларни,
Тупă çиçĕмле пени...

Йывăç çинче хĕрлĕ çырла.
Сĕткенĕ – хĕрлĕ юн.
Каçпа хупсан та куçăма
Аса килет çав кун.

Иртет çул, улшăнать тĕнче.
Анчах та манăн-ха епле?
Пĕрре ак куçăм умĕнче
Персе пăрахрĕç çынсене.

Тав, турăçăм, упрарăн эс
Мана çак йывăр кунсенче.
Анне тыттарнăччĕ хĕрес
Вăрçа каяс самантсенче.

Ун чух мĕн чул эп куртăм юн,
Мĕн чухлĕ çын вилли...
Эп пĕлтĕм, çук фашистăн чун.
Хăех вăл – чун илли!

Иртсен хăрушă вăхăтсем
Тĕп турăмăр вăрçа.
Тăван Раççейĕн çыннисем!
Хаклаçчĕ пурнăçа!

***Марина ПАВЛОВА,***
***7 «б» класс.***
Çĕрпӳ районĕ,
Опытнăй шкулĕ.



Женя БОВЫКИН (Çĕнĕ Шупашкар, 47-мĕш ача сачĕ) ӳкерчĕкĕ.

### Пирĕн ĕç çапла...

«Тар – юн мар, ан шеллĕр ăна, –
Çирĕп саспа калать старшина. –
Пирĕн ĕç çапла. Вăрçă халь.

Тăмпала вараланнă ал-ура –
Эпир ĕçлетпĕр траншейăра.
– Пирĕн ĕç çапла. Вăрçă халь.

Ленинград, Ленинград хуйхăра.
Пирĕн хыçра-çке «Аврора».
Кĕрешер! Тĕп тăвар тăшмана!

***Евгений ФЕДОРОВ,***
***7 «б» класс.***
Шупашкар,
19-мĕш шкул.



Полина БЕЛОВА (Çĕнĕ Шупашкар, 47-мĕш ача сачĕ) ӳкерчĕкĕ.

### Эпĕ телейлĕ

Эп вăрçă курман, курас та мар!
Ман тум йĕпенмен юнпа.
Ялан шкулалла эп чупатăп хастар,
Телейлĕ-çке хам пурнăçпа.

Куç умне ак тухать-çке блокада.
Эс – истори палли. Эс çунан.
Сан çинчен çырнине эп вулатăп,
Çут тумламĕ юхать-çке куçран.

Тăшмана тĕппипе аркатасшăн
Шкул ачи, ав, станок умĕнче
Кунĕн-çĕрĕн ĕçлет те çĕр-шывшăн,
Хĕç-пăшал – ун хĕрӳ аллинче.

Эп вăрçă курман, курас та мар!
Ман тум ан йĕпентĕр юнпа.
Иртнине ас илсе малалла пурăнар,
Ак паян тасаласчĕ чунпа.

***Ольга КУДИКОВА,***
***7 «б» класс.***
Шупашкар,
19-мĕш шкул.

### Çĕнтерӳ уявĕ

Ӳсеççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Тăраççĕ палăк умĕнче,
Кашлаççĕ çилпеле вĕсем,
Вилнисене аса илсе.

Тăраççĕ палăк умĕнче
Шкул ачисем караулта.
Хисеплĕ ветерансене
Татах та курăпăр кунта.

Калаççĕ ăшă сăмахсем,
Параççĕ капăр чечексем,
Утаççĕ çамрăк салтаксем –
Мухтав сире, ветерансем!

***Ирина КУЗЬМИНА.***
Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт Кипеч шкулĕ.



Миша МИШИН (Çĕнĕ Шупашкар, 47-мĕш ача сачĕ) ӳкерчĕкĕ.

### Тав маттур салтаксене!

– Вăрçă пĕтрĕ! Вăрçă пĕтрĕ! –
Савăнаççĕ салтаксем.
– Вăрçă пĕтрĕ! Вăрçă пĕтрĕ! –
Кăшкăраççĕ ачасем.

Тем те турĕ-çке тăшман
Раççее тытса илме.
Пирĕн пур пĕр парăнман,
Майне тупнă çĕнтерме!

Тав маттур салтаксене
Тăшмана аркатнăшăн!
Пуç таятăп вĕсене
Раççее хăтарнăшăн.

***Дима ГРИГОРЬЕВ.***
Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт шкулĕ.

### Пултăр тăнăçлăх!

Паттăр çапăçнă вĕсем –
Вăйлă, хастар салтаксем.
Тав тăваççĕ халь çынсем,
Халалласçĕ сăвăсем.

Тек ан пулччăр вăрçăсем,
Ан çухалччăр салтаксем.
Пултăр мир çеç пурнăçра,
Пурăнар-ха туслăхра!

***Диана ПЕТРОВА.***
Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт шкулĕ.

### Ӳсеççĕ çӳллĕ чăрăшсем

Ӳсеççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Тем шухăшлаççĕ те кашлаççĕ.
– Мĕнле пурнаççĕ-ши çынсем? –
Тесе шавлаççĕ те шавлаççĕ.

Кашлаççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Тек шухăшлаççĕ те калаççĕ:
Ан пулччăр вăрçă кунĕсем! –
Тесе пире кăштах юнаççĕ.

Тăраççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Турачĕсем хуллен выляççĕ.
– Салам сире, юлташăмсем! –
Тесе каланăн туйăнаççĕ.

Пăхаççĕ çӳллĕ чăрăшсем:
Ял сăнĕ мĕн тери илемлĕ.
Вут-çулăмри хаяр кунсем
Ахаль иртмен – çынсем телейлĕ.

Мăнаçлă ватă чăрăшсем
Нимле çиле те парăнмаççĕ.
Тăраççĕ тейĕн салтаксем –
Çĕр-шыв чысне вĕсем сыхлаççĕ.

Ӳсеççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Тек шухăшлаççĕ те шавлаççĕ:
– Ан пулччăр вăрçă кунĕсем! –
Тесе пире халь ăс параççĕ.

***Вероника ВАРФОЛОМЕЕВА.***
Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт шкулĕ.

### Хăрушă вăхăт

Пĕрре илемлĕ çу кунне
Пуçланнă вăрçă ирхине.
Каять-çке асатте те ман
Вăрçа: тĕп пултăрччĕ тăшман!

Асаннепе ачисем
Ăсатаççĕ макăрса.
Кӳршисем, тăванĕсем
Ал сулаççĕ ыр сунса.

Ку тăшман хаярлăхпа
Никама та шеллемест.
Сусăрланнă урапа
Асатте киле килет.

Тăвату çул хушшинче
Нумай салтак аманать,
Вилет вăрçă хирĕнче –
Нумай ача макăрать.

***Наташа СТЕПАНОВА.***
Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт шкулĕ.

### Пире вăрçă кирлĕ мар!

Ыйтрăм эп асаннерен:
– Вăрçă мĕн тути каларĕ?
Куçне шăлчĕ те хуллен
Асаннеçĕм хуравларĕ:
– Аттем пулнă вăрçăра,
Вилĕм аснă таврара.
Кашни кун ăна кĕтеттĕм,
Таврăнма чунтан чĕнеттĕм.
Килчĕ виç кĕтеслĕ хут –
Ют çын çырнă сарă хут.
«Сас-хурасăр çухални» –
Маншăн аслати çапни.
Татрĕ ĕмĕте тăшман –
Шанчăк çухалмарĕ ман.
Вăрçă пĕтрĕ. Ку – телей.
Çук, килмерĕ вăл киле.
Шанăç пĕтмĕ-ха тата...
Ман атте халĕ ăçта?

Ыйтрăм эп кукамайран:
– Вăрçă мĕн тути каларĕ?
Кăшт тăхтарĕ те кайран
Ассăн кукамай сывларĕ:
– Вăрçă вăл – хăруш тăшман,
Мĕн чуль тăлăх хăварман!
Тăнăç пурнăçа çăлма
Кайрĕç ар çынсем вăрçа.
Пурте сывă юлайман,
Çĕнтерĕве курайман.

Ыйтрăм эпĕ куккаран:
– Вăрçă тути мĕн каларĕ?
Шухăша кайсан аран
Сăмахне çапла пуçларĕ:
– Вăрçă маншăн вăл – суран,
Ют çĕр-шыв – Афганистан.
Пĕрин хыççăн теприне
Эп çухатрăм туссене.
Киле таврăнсан анне
Паллаймарĕ ывăлне:
Манăн çӳçĕм шап-шурах,
Эпĕ – çирĕмре анчах...

Ыйтрăм эпĕ пиччерен:
– Вăрçă мĕн тути каларĕ?
– Вăрçă вăл – Чечня, çĕмрен.
Яш салтак пĕрех чакмарĕ.
Кунта паттăрлăх кăтартнă,
Килтисемшĕн пăшăрханнă.

Ыйтрăм эпĕ хамран хам:
– Вăрçа мĕнпе танлаштарам?
Çапларах эп хуравлам:
– Вăрçă – асанне куççулĕ,
Тăлăх кукамай кун-çулĕ,
Вăрçă вăл – кукка суранĕ,
Ман пиччен паха медалĕ.
Вара çирĕппĕн калар:
Пире вăрçă кирлĕ мар!

***Алина МИХАЙЛОВА.***
Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт шкулĕ.



Аня МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

### Халь те сыхăра...

– Çĕкленĕр хăвăртрах! Атакăна! Ура-а! –
Илтетĕп асатте кăшкăрнине.
Шартах сикетĕп те тăратăп ыйхăран –
Сасси унăн çурать-çке чĕрене.

...Вун саккăрти кĕрнеклĕ яшсене
Пĕрле пуçтарăнса ял-йыш ăсатнă
Хăй тăванне тата тус-юлташне
Нумайăшĕ вăрçа çитсен çухатнă.

Вут-çулăмри пĕрремĕш кунсенчех
Мĕн чул салтак пĕтмен пуль, пĕлейместпĕр.
Мĕн чул хăюлăх çамрăк чунсенче!
Çапăçăва çĕкленнĕ шикленмесĕр.

Ах, тем те тӳснĕ пуль çав кунсенче,
Вутра çунман, шывра путман ман асаттеçĕм.
Тăшман ури пусса утайнă çĕр çинче –
Çавна халь тарăхса аса илеççĕ.

Пĕр харăссăн тăрса пултарнă çĕнтерме
Совет салтакĕсем хаяр тăшман çарне.
Миçе хут тĕл пулса куçа куç вилĕмпе
Ман асаттеçĕм пур пĕр çитнĕ хăй килне.

Анчах та вăрçă ахрăмĕ канăç памасть ăна,
Телейлĕ пурнăçшăн пур хунă тусĕсем асра.
Тĕлĕксенче çаплах хĕнет вăл тăшмана.
Вăл халь те салтак тейĕн. Вăл халь те сыхăра...

***Катя ИВАНОВА.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.



Аня МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

ÇАМРĂК СПОРТСМЕН

# «Куçусем чăн-чăн кĕрешӳçĕнни пек!»

Вăрнар районĕнчи Санарпуç шкулĕ хăйĕн вĕренекенĕсемпе чăннипех те мухтанма пултарать. «Ачасем вĕренӳре те, спортра та маттур», – тет директорăн вĕренӳ тата воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Вера Павловна Иванова. Уйрăмах кунта ирĕклĕ кĕрешӳ вăйлă аталаннă.



Спортăн çак тĕсĕпе хатĕрленме çӳрекенсем район, республика ăмăртăвĕсенче сахал мар палăраççĕ. Хĕр ачасем те айккинче юлмаççĕ! Улттăмĕш класри Настя Краснова, саккăрмĕшĕнчи Линда Журавлева, тăххăрмĕшĕнчи Диана Яковлева тантăшĕсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче.

Диана ирĕклĕ кĕрешӳ секцине çулталăк ытла çӳрет ĕнтĕ. Çак вăхăтра, паллах, хăш-пĕр вăрттăнлăха алла илме ĕлкĕрнĕ. Çапах вĕренмелли тата нумай пулнине те туять. Мĕнле туслашнă-ха вăл спортăн çак тĕсĕпе? Ăнсăртран темелле-ши? Е пурнăçра пĕтĕмпех шухăшласа хунă пек пулать, анчах эпир ăна туймастпăр çеç-ши? Пĕррехинче шкула тренер килсен Диана хăйне ятарласа лайăх енчен кăтартма та тăрăшман, çапах пысăк ăста ăна, юнашар иртсе пыраканскере, чарнă та секцие çырăнма сĕннĕ. «Санăн куçусем ыттисен пек мар, чăн-чăн кĕрешӳçĕнни пек çунаççĕ», – тенĕ вăл. Хĕр ача нумай шухăшласа тăман, тренировкăна кайса пăхас тенĕ. Шăмшака çемĕçтернĕ хыççăн тĕрĕслев пуçланнă. Пĕрремĕш кĕрешӳрех Диана çĕнтернĕ. Хирĕçле хĕр ача хăй выляса янине ĕненесшĕн мар, çĕнĕрен пуçлама ыйтнă. Диана ку хутĕнче те вăйлăрах пулнă. Çĕнтерӳ тути килĕшнĕрен вăл спортăн çак тĕсĕпе малалла та хатĕрленме тĕллев лартнă.

Паллах, ăнăçусăрлăх тата кӳренӳ никамшăн та ют мар. Çĕнтерӳ те яланах Диана аллинче пулаймĕ. «Хирĕçле кĕрешӳçĕ мана парăнтарсан çав тери кулянаттăм, кăмăл сӳнетчĕ, – малтанхи утăмсене аса илет çамрăк спортсмен. – Выляса яма та пĕлмелле иккен!» Пушкăртри кӳренӳллĕ саманта ниепле те манаймасть вăл. Салават хулинче Иван Ярыгин ячĕпе йĕркеленĕ Пĕтĕм Раççейри ăмăртура финала çитнĕ Дианăн виççĕмĕш вырăншăн Дагестан хĕрĕпе кĕрешме тивнĕ. «Ку халăх хĕрĕсем мĕн тери вăйлă иккенне пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Балл çитейменнипе эпĕ ăна выляса ятăм...» – пăшăрханать Диана. Çав вăхăтра унăн пурин çине те алă сулса пĕтĕмпех пăрахас килнĕ, ăш-чик вĕренĕ, чунĕ тулхăрнă. Ăнланма та пулать. Çĕнтерӳ кайăкĕ сан умăнта çуначĕсемпе сулкалашнă чухне ăна тытайманшăн ӳкĕнмĕн-и? «Нивушлĕ эпĕ çав тери вăйсăр?» – çапларах шухăш хĕр ачана халтан янă. Çав вăхăтрах унччен «ырă канаш» паракансен сăмахĕсем аса килнĕ: «Мĕне кирлĕ сана ку? Эсĕ хĕр ача-çке! Пурăна-киле арçын ача пек курăнма тытăнăн...» Çитет! Диана çак кĕрешӳ хыççăн пысăк пăнчă лартма шухăш тытнă.

Анчах ăста тренер Виталий Петрович Трофимов хĕр ачана йывăрлăха парăнасран çăлса хăварнă, выляса янипе çырлахса малашне çĕнтерӳшĕн хытăрах кĕрешме хавхалантарнă. Çамрăк спортсмен ăна çакăншăн питĕ юратать тата хисеплет, чунтан тав тăвать. Çулталăк хушшинче Диана пĕрремĕш разряд илме, спорт маçтăрĕн кандидачĕн нормативне пурнăçлама пултарнă. Икĕ хутчен выляса янă вăл, çавăн чухлех виççĕмĕш тухнă, иккĕмĕш вырăн та чылай, пилĕк çĕнтерӳ вара унăн маттурлăхне, ăсталăхне çирĕплетет.

Халĕ Диана яланах хăйĕн вăйне шанать. Выляса ярсан та çакна тивĕçлипе йышăнма пултарĕ вăл. Йывăрлăха парăнма юраманнине лайăх ăнланать. Пурнăç хăй те кĕрешӳрен тăрать тейĕн. Çак хастар та чĕрĕ куçлă хĕр ачан малашне тата нумай-нумай пысăк çĕнтерӳ пулинччĕ!

## Пĕлсе тăма:



***Ирĕклĕ кĕрешӳ*** *(акăлчанла: Freestyle, французла: Lutte libre) – спорт тĕсĕ, ятарлă правилăсене пăхăнакан мăшăр кĕрешӳ. Унта тĕрлĕ приемпа усă кураççĕ: ярса тытни, ыткăну, улшăну, карт туртни т. ыт. те). Кашниех хирĕç кĕрешекене хул калакки çине çавăрса хурса çĕнтерме ăнтăлать. Ирĕклĕ кĕрешӳре, грек-рим тĕсĕпе танлаштарсан, хирĕçлине урисенчен ярса тытма, карт туртма, мĕнле те пулин приемпа усă курнă чухне урасене хутшăнтарма юрать.*

*Пиçĕлĕхпе вăй çăл куçĕ – ирĕклĕ кĕрешӳ. Тренировкăра уйрăмах «кĕпер» тăвассине пысăк тимлĕх уйăрмалла, çав вăхăтра урайĕнчи кавире атлетăн аллисемпе ура кĕллисем, çамки тата хăш чухне янахĕ кăна перĕнмелле, çурăмĕ вара пĕкĕ пек авăнмалла. Пиçĕлĕхе аталантарма ятарлă акробатика хăнăхтарăвĕсене пурнăçламалла: чикĕл-макăль çаврăнни, урапа, фляк, рондат, сальто, алă çине тăрса утса çӳрени... Шăмă сыппи, юн тымарĕсем тата лимф тытăмĕ çирĕп те çаврăнăçуллă пулмасан кĕрешӳçĕн çĕнтерес шанăç çук. Çавăнпа ӳкме тата асăрханма та пĕлмелле. Вăрăм дистанцие чупсан тата нумай хускануллă вăйăсене (тĕслĕхрен, регби правилисене пăхăнакан баскетбол) вылясан сывлав тытăмĕпе чăтăмлăх аталанать. Юлашки вара питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.*

*Вăй-хăвата туптама пулăшакансем – кашта (перекладина) тата пăрăс (брусья). Кукленӳ, штангăна выртса тата тăрса çĕклени, çыхăпа (жгут) ĕçлени те ырă витĕм кӳрĕç.*

*Спортсмен пулас тесен наянлăх çинчен манса каймалла. Çавăнпа та паянах ĕçе кӳлĕнме пултаратăр.*

# «Ай, аннеçĕм!» – шикленсе ӳкнĕ пĕри Олега курсанах

**Шупашкарти 28-мĕш шкулта тăваттăмĕш класра вĕренекен Олег Шурумкин пĕрремĕш класранпах спортпа туслă. Ирĕклĕ кĕрешӳ секцине çӳрекенскер çакă характера тата дисциплинăна çирĕплетме пулăшнине ĕненет.**

Чăнах та, кăмăл çирĕплĕхĕ унăн сăнĕнчех курăнать. «Кунта хирĕçле кĕрешӳçĕне куçран вĕçертмелле мар, вăл мĕнле хускану тума пултарасса пĕлсе тăмалла», – тет Олег. Владимир Николаевич тренер та ăна çавнах вĕрентет, вăлах арçын ачашăн тĕслĕх вырăнĕнче.

Хуть те мĕнле ĕçе пуçăнсан та çакă чăнах та кирлине пĕлес килет-çке. Кам та пулин хавхалантарсан вара хăвна ытларах шанма тытăнатăн. Олег та çавăн пекех. Çывăх çынсем: «Маттур, пултаратăн!», – тени уншăн Хисеп хучĕнчен пахарах.

Тăрăшни, çывăх çынсен шанăçне тӳрре кăларма тĕллев лартни яланах пулăшать. Хула тата республика тулашĕнчи ăмăртусене хутшăнса Олег икĕ кубок, тăвată медаль тата ултă Хисеп хучĕ çĕнсе илнĕ. Мари Республикинчи кĕрешĕве арçын ача тахçанччен аса илсе кулĕ-ха. Хирĕçле кĕрешӳçĕ ăна курсанах: «Ай, аннеçĕм!» – тесе кăшкăрса янă. Те çухалса кайнă ĕнтĕ вăл, те хăй выляса ярасран шикленнĕ?

Олег калаçма юратать, такамăн кăмăлне те çавăрĕ. Мăн кăмăллă мар вăл, çавăнпа ыттисене хăйĕн патне илĕртет те пуль. Çулне кура мар ăслă шухăшлаканскерпе темĕн çинчен те пуплеме пулĕ. Ăмăртăва хутшăнса тĕрлĕ районта, хулара пулса курнă хыççăн нумай тус-юлташ тупнă вăл. Ватă çынсене хисеплекен арçын ача кукамăшĕпе асламăшĕ ĕлĕкхи пурнăç çинчен каласа панине тимлĕ итлет, паянхипе танлаштарать те: «Эпир халĕ лайăхах пурăнатпăр çав», – тет.

Пушă вăхăт вара унăн çукпа пĕрех. Вырсарни кунсăр пуçне кашни кунах ирĕклĕ кĕрешӳ секцине çӳремелле-çке, манпа калаçнă чухне те унта çитме хыпаланатчĕ вăл. Тепĕр чухне вара хăйне кăшт ирĕклĕрех туйсан юлташĕсемпе футбол мечĕкĕ тапма чупать. «Вăхăта усăллă, киленӳллĕ тата лайăх çынсемпе ирттермелле», – тет Олег.

Ирĕклĕ кĕрешӳре такам та ăсталăх кăтартма пултарĕ-ши? Темĕнле çав... «Туртăм пултăрччĕ çеç», – тет Олег. Эппин, шанăç пур-ха.

Унăн амăшĕ пĕчĕк чухнех спортсмен пулма ĕмĕтленнĕ, анчах шухăшне пурнăçа кĕртме васкаман. Халĕ вара ывăлĕн çитĕнĕвĕшĕн савăнса ăна май килнĕ таран хавхалантарать, тĕпренчĕкĕнче хăйне курать тейĕн.



Çĕр çинче кашни çыннăнах ĕмĕт пулмалла. Унсăрăн мĕн кăсăклантарĕ-ши пире çак пурнăçра? Олегăн та пур вăл. Спорт маçтăрĕ тата çĕр-шыв чемпионĕ пулма ĕмĕтленекенскере ăнăçса кăна пытăрччĕ!

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Пăшал вырăнне — сĕрме купăс



**Муся Пинкензон Молдавири Бельцы хулинче çуралнă. Арçын ача пиллĕк тултарсанах хула хаçачĕ вăл епле ăста сĕрме купăсçă пулни çинчен çырса кăтартнă. 1941 çулта ашшĕне, Владимир Борисович тухтăра, Усть-Лабинскри çар госпитальне куçараççĕ. Пинкензонсен çемйи Полина Ивановна Каленова патĕнче вырăн тупать. Фронт Усть-Лабинск патнех çывхарать ĕнтĕ. Госпитале эвакуацилеме хатĕрленеççĕ. Нимĕç çарĕсем ытла та ăнсăртран пырса кĕнĕрен нумайăшĕ тарса ĕлкĕреймест. Часах Мусик çемйине арестлеççĕ. Станицăра пурăнакан халăха хăратас тесе нимĕçсем арестленисене вĕлерме палăртаççĕ, Пинкензонсем те çав телейсĕрсен шутĕнчех.**

* * *

Мусик амăшне япалисене чăматана пуçтарма пулăшать.

– Анне, эпир каялла таврăнатпăр-и?..

– Паллах, таврăнатпăр! – Феня Моисеевна ывăлĕ çине пăхать те вăл епле ӳссе çитнине асăрхать. Пĕррехинче ашшĕпе уçăлса çӳренĕ чухне Мусик пĕр пӳрт чӳречинчен сĕрме купăс сассине илтнĕччĕ. Паганини пьесине уйăрса илнĕ ача пĕр вăхăт хытса тăнă, кĕвĕ тыткăна илнĕ ăна. Киле çитсенех вăл икĕ патак тупнă та ас туса юлнă кĕвве евĕрлеме хăтланнă. Шăпах çак самантра асăрханăччĕ ăна амăшĕ. Ашшĕ сĕрме купăс илсе парсан вăл мĕн тери савăннăччĕ! Музыка вĕрентекен Эккельринг маэстро арçын ачан пултарулăхне туйса унпа нумай ĕçлетчĕ. Пилĕк çулта Мусик пĕрремĕш хут концертра кĕвĕ каланăччĕ...

Халĕ Феня Моисеевна ывăлĕ çине пăхать те шывланнă куçне шăлать. Хуларан тухса каймалла-çке. Бельцы çийĕн фашист самолечĕсем кĕрлесе иртеççĕ. Таçта Прут хĕрринче чи хаяр çапăçусем пыраççĕ...

– Анне, мĕншĕн йĕретĕн?

– Эпĕ йĕместĕп, – Феня Моисеевна каллех япалисене пуçтарать.

Амăшĕ асăрхиччен арçын ача чăматанран çывăрмалли тумне кăларать те ун вырăнне сĕрме купăсне тата нота тетрачĕсен тĕркине кĕртсе хурать. Çӳлĕк çинче вара Сен-Санс, Дворжик, Моцарт пьесисем юлаççĕ... Моцарт... Унăн Иккĕмĕш концертне вĕренме мĕн чухлĕ вăй кирлĕ пулчĕ-çке. Çак кĕвве Кишиневри олимпиадăра выляса пама мĕн тери ĕмĕтленнĕччĕ вăл. Анчах Моцарт концертне лартма май килмерĕ. 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче Молдавири шкул ачисен пĕрремĕш олимпиадине савăнăçлăн уçма пулмарĕ. Çав ирхине вăрçă пуçланчĕ.

Поездпа нумай кайма тиврĕ. Çимелли те пĕтсе çитрĕ ĕнтĕ.

– Анне, сĕрме купăс пар-ха... Выляса илем... – халтан кайнă Муся кĕвĕ инструментне тытса унăн хĕлĕхĕсене асăрханса перĕнчĕ. Вăрах сасă илтĕнсе кайрĕ. Хăйĕн вăйсăрлăхне çĕнсе арçын ача тепĕр хут хĕлĕхсене тĕкĕнчĕ. Акă сĕрме купăс юрласа та ячĕ. Çынсем чарăна-чарăна пĕчĕк музыкçăна итлеççĕ. Вĕсем халĕ йывăр çул çинчен те манчĕç тейĕн. Çак кĕвĕ çутă та савăнăçлă тĕнчене чĕнет. Мусик вĕçлерĕ. Анчах никам та каймасть. Пурте шăп. Кашниех шухăш авăрне путнă.

– Арçын ача! – илтĕнет сасартăк. Юнашарти çар эшелонĕнчи пĕр салтак ăна хăйĕн патне кăчăк туртать. – Кĕвĕ каласа пар-ха, шăпăрлан! Фронта каятпăр!..

Мусик пуçларĕ. Сĕрме купăс Сулико хĕр, анлă уйхир е савăнăçлă çил çинчен юрлать. Сасартăк паровоз кăшкăртса сĕрме купăс сассине пăсрĕ.

– Вагонсем тăрăх! – янăрарĕ команда.

– Пурăн, шĕвĕркке! Выля, – терĕ те пĕр салтак арçын ачана çăкăр тата сахăр катăкĕ тыттарса хăварчĕ. Акă станцин кирпĕч çурчĕ хыçĕнче юлашки вагон та курăнми пулчĕ. «Хăвăртрах таврăнăр, – шухăшларĕ Мусик. – Çĕнтерсе килĕр!»

Çирĕм кун кайсан поезд Усть-Лабинск станцийĕнче чарăнать. Эвакуациленисене станицăра пурăнакансем патне вырнаçтараççĕ. Владимир Борисович çав каçах госпитале каять. Авăн уйăхĕ. Мусик вырăнти шкула пиллĕкмĕш класа çӳрет. Пĕрре ачасем пуçтарăнса госпитале аманнисене концертпа хавхалантарма каяççĕ. Муся сĕрме купăс калать. Юрă хыççăн юрă янăрать. Çамрăк музыкçăран вара татах та татах ыйтаççĕ. Пĕр палатăран теприне çӳресе сусăррисен кăмăлне çĕклеççĕ ачасем. Кайран ывăнса çитнĕскерсем килне кăмăллăн таврăнаççĕ. Çапла çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ.

Пĕррехинче Владимир Борисович килне каça юлса çеç таврăнчĕ. Мусьăна хăйĕнпе пĕрле пыма ыйтрĕ.

– Ывăлăм, санăн пулăшăву кирлĕ. Паян пирĕн пата йывăр аманнă летчика илсе килчĕç. Ыратнипе вăл хыт кăшкăрать. Кĕвĕ каласа пар-ха ăна.

Чăнах та, Мусик сĕрме купăс хĕлĕхне перĕнсе сасă кăларсанах летчик йынăшма чарăнса ун енне çаврăнчĕ. Кĕвĕ хыççăн кĕвĕ янăрать. Сĕрме купăс чарăнсан лĕтчик ачана хăйĕн патне чĕнсе илчĕ те:

– Тавах сана, ывăлăм. Эпĕ чăтăп. Эпĕ пурăнăп! Эпĕ пурăнăпах, фашистсене çапса аркатăп...

Фронт Усть-Лабинск станици патнех çывхарчĕ. Кубань енчен снаряд çурăлни илтĕнме пуçларĕ. Госпитале эвакуацилеме хатĕрленеççĕ. Владимир Борисович илсе тухса ĕлкĕреймен сусăрсене операци тăвать.

Нимĕç çарĕсем станицăна кĕтмен çĕртен çитрĕç, вырăнтисенчен нумайăшĕ тарса ĕлкĕреймерĕ, çав шутра Пинкензонсен çемйи те.

Палатăна салтаксем кĕнĕ вăхăтра Владимир Борисович операци тăватчĕ. Вырăсла калаçакан офицер ăна:

– Чарăнăр, тухтăр, – терĕ хаяррăн. – Пациентăра пур пĕрех персе вĕлерĕпĕр. Аманнисем пирĕн хамăрăн та нумай, вĕсене сирĕн пулăшу кирлĕ.

– Эпĕ операцие чарма пултараймастăп, – терĕ хирург. – Сире вара палатăран тухма ыйтатăп...

Офицер салтаксене паллă кăтартсан лешĕсем тухтăр патне пыраççĕ те ăна операци тумалли сĕтел патĕнчен тĕртсе тухаççĕ... Владимир Борисович килне тухтăр халачĕпе тата перчеткисемпех таврăнать.

– Халĕ темĕн те кĕтме пулĕ, – тет вăл арăмне ассăн сывласа. Тепĕр куннех ун патне салтаксем килеççĕ. Офицер каллех тухтăртан пулăшу ыйтать. Владимир Борисович сутăнчăк мар, хăйне халĕ мĕн кĕтессе пĕлсе вăл тӳрех алăк патне утать. Муся ашшĕ хыççăн ыткăнать, анчах амăшĕ ăна чарса ĕлкĕрет.

– Феня, ывăла сыхла, – тесе хăварать ашшĕ.

Персе пăрахассипе хăратсан та Владимир Васильевич тăшмансене пулăшма килĕшмест. Çавăнпа ăна арестленĕ ытти çынсемпе пĕрле окоп чавма яраççĕ. Ĕçрен таврăннă чухне офицер каллех Пинкензона хăйĕн патне чĕнсе госпитальте ĕçлеме сĕнет, анчах тухтăр хирĕçлесе пуçне сулать кăна. Часах Феня Моисеевнăпа Мусьăна та арестлеççĕ. «Феня, эпĕ вĕсемшĕн тухтăр пулма килĕшеймĕн!» – тет ашшĕ ывăлне.

Станицăна пурăнакансене хăратас тесе фашистсем арестленисене вĕлерме шут тытаççĕ. Пинкензонсен çемйине те çак хаяр шăпа кĕтет. Телейсĕрскерсене Кубань хĕрне илсе тухаççĕ, çавăнтах фашистсем станицăра пурăнакансене те хăвалаççĕ. Муся пĕр аллипе амăшĕнчен çавăтăннă, тепринпе сĕрме купăс тытнă. Арестленисене кăшкăра-кăшкăра пĕр рете тăратаççĕ. Салтаксене паллă пама офицер аллине çĕклет, ăна каялла антарма вара васкамасть-ха.



– Офицер господин... – Владимир Борисович маларах тухса тăрать. – Ывăла хĕрхенĕр, вăл... – пуля ăна каласа пĕтерме памарĕ. Амăшĕ ашшĕ патне ыткăнчĕ, анчах автомат черечĕ ăна та çитрĕ. Çак самантра офицер патне пĕчĕк Муся çывхарчĕ. Аллинче – сĕрме купăс.

Хумханнипе арçын ачан сасси çĕте-çĕте ларать:

– Вилес умĕн... мана... юратнă кĕвве... каласа пама... ирĕк парăр...

Офицер пистолет вуллине Муся енне çавăрчĕ. Пинкензон тепĕр хут ыйтрĕ. Офицер арçын ача çине кăсăкланса пăхрĕ те салтаксене пăшалĕсене антарма хушрĕ.

– Кала!.. Кала! Килĕшсен – пурăнăн!

Муся футлярне çĕр çине хучĕ, васкамасăр уçрĕ те пĕчĕк сĕрме купăсне кăларчĕ. Ăна асăрханса янахĕ çумне тытрĕ, хĕлĕхĕсене перĕнчĕ. Малтан вăйсăртарах, кайран вара ирĕккĕнрех янăраса кĕвĕ Кубань çийĕн саланчĕ. Муся юрри хăватлăн илтĕнме пуçларĕ: «Çĕклен выçлăхрисемпе тарçăсен ылханпа хуралнă тĕнчи»... Фашист офицерĕ тарăхнипе тилĕрсе кайрĕ.

– Чарăн! – кăшкăрчĕ вăл сĕрме купăсçă умĕнче пистолечĕпе сулкалашса. Муся ун çине пăхмарĕ те, вăл хыпаланчĕ. Ĕлкĕрмелле, тата кăштах...

Пистолетран пенĕ сасă илтĕнчĕ, ун хыççăн тепре... Муся чĕркуçленсе ларчĕ, сĕрме купăсне пĕрех вĕçертмерĕ, юрă кĕввине каласа пĕтерме хăтланчĕ. Автоматран урисене персен вăл тĕшĕрĕлсе анчĕ. Сĕрме купăс та ачан вĕçленнĕ пурнăçĕпе пĕрлех шăпланчĕ. Анчах пуçтарăннă çынсем çак юрра малалла тăсрĕç, юлашки çынна персе пăрахиччен юхан шыв çийĕн янăрарĕ вăл.

...Чарджоу хулинчи 21-мĕш чугун çул шкулĕн 7 «б» класĕнче вырăс чĕлхи урокĕ пырать. Ачасем диктант çырма хатĕрленеççĕ. Вĕрентекен портфельтен хаçат кăларать те Рузя Гендлер ларакан парта патне пырать.

– Ачасем, паян эпир ытти чухнехинчен урăхларах диктант çырăпăр. Ку текстра Усть-Лабинск пионерĕн Мусик Пинкензон паттăрлăхĕ çинчен каланă.

Рузя хăйне йăнăш илтнĕн туйрĕ. Мусик! Пинкензон! Чăнах-ши? Иккĕмĕш çул ĕнтĕ унăн ашшĕпе амăшĕ Пинкензонсен çемйи çинчен мĕн те пулин пĕлесчĕ те канăçне çухатнă. Вĕрентекенрен тепĕр хут ыйтма аван мар. Текста тимлĕ итлесе хĕр ача кашни сăмахне çырса пычĕ. «Мусик сĕркĕче юлашки хутчен сулса ячĕ. Пăшалтан пени илтĕнсе кайрĕ. Юнпа вараланнă пĕчĕк сĕрме купăсçă тĕшĕрĕлсе анчĕ», – тенине илтсен вара Рузя кăранташне ӳкерсе хыттăн йĕрсе ячĕ.

– Рузя, мĕн пулчĕ? – терĕ вĕрентекен. – Лăплан, кун пек юрамасть-çке...

Куççульне аран чарса хĕр ача:

– Муся Пинкензон – манăн икĕ сыпăкри шăллăм... – терĕ. Класри ачасем тӳрех ура çине тăчĕç. Вĕрентекен те çухалса кайрĕ.

– Ларăр, ачасем, ларăр. Рузя часах лăпланĕ...

Çиччĕмĕш класс ачисем вара ларма васкамарĕç, харсăр та паттăр тантăшне хисепленине палăртса чылайччен шăп тăчĕç.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

Тантăш
18 №, 2014, çу, 8



# Айăп

**Пĕр пайлă, тăватă курăнуллă пьеса**

**Вылякансем:**

***Павăл мучи – вăрçă ветеранĕ, 79 çулта.***

***Саша – унăн мăнукĕ, 12 çулта.***

***Митюк – Саша юлташĕ, хула ачи, 13 çулта.***

***Петр Михайлович – кӳршĕ, вăрçă ветеранĕ, 78 çулта.***

***Светлана – медсестра, 25 çулта.***

**Пĕрремĕш курăну**

*Павăл мучи килте ларать. Çамрăк вăхăта аса илет. Пӳрте Саша кĕрет.*

**Саша** *(аслашшĕ çине пăхса)*. Асатте, эсĕ вăрçăра пулнă вăхăтсене лайăх ас тăватăн-и?

**Павăл мучи.** Ас тăватăп, паллах! Çак самантсене манас тесен те пуçран кăларса пăрахаймăн!

**Саша** *(интересленсе)*. Асатте, ун чухне лару-тăру мĕнлерех пулнă? Ун пирки каласа пар-ха.

**Павăл мучи** *(шухăша путса)*. Вăрçă пĕтнĕренпе чылай çул иртрĕ ĕнтĕ. Ах... Ун чухне мĕн тери йывăр пулнă-çке... Çакна сăмахпа каласа пама та çук пулĕ. Мĕн кăна курма тивмерĕ-ши пире! Эпĕ ун чухне вун сакăр çулти каччă. Мана вăрçа илсе кайрĕç. Малтанхи кунсенче çав тери йывăрччĕ... Уйрăмах Сталинградри çапăçура.

**Саша.** Асатте, ара, санăн "Сталинграда хӳтĕленĕшĕн" медаль те пурччĕ вĕт!

**Павăл мучи.** Пурччĕ çав. Ăçта-ха вĕсем манăн... *(Шкапран кительне кăларать. Ун çинче – кăкăр тулли медаль, орден)*. Акă вĕсем... Ак çакна Сталинградри хĕрӳ çапăçура пулнишĕн, кăна вара Берлина илнĕшĕн панăччĕ... *(Тепĕр медале кăтартса)*. Ку маншăн чи хакли. Кунта орденсем... Тахçанах алла тытманран хуралма та пуçланă иккен... Вĕсене тасатмалла... *(Кительне, наградăсене тасатма пуçлать. Çак вăхăтра Митюк кĕрет)*.

**Митюк.** Саша, кунĕпе килте мĕн туса ларатăн? Урамра хĕвел хĕртсе пăхать. Атя, тухрăмăр! Саша... *(Павăл мучин аллинчи медале курсан тĕлĕнсе каять)*. Павăл мучи, ку орденсем пурте сирĕн-и? Шучĕ те çук-çке... Мĕн тери хитре вĕсем...

**Павăл мучи.** Ăхă, манăн. Акă, тасатма шухăшларăм-ха. Вĕсене тытманранпа чылай вăхăт иртрĕ. Епле хаклă наградăсем!

**Митюк** *(кăвак тĕслĕ футляр ăшĕнче выртакан орден çине кăтартса)*. Ак çакă та-и?

**Павăл мучи** *(ачасем интересленнине курса)*. Çакă та... Ăна мана вăрçă хирĕнчен аманнă юлташа йăтса тухнăшăн панăччĕ.

**Саша.** Асатте, эсĕ чăн-чăн паттăр!

**Митюк.** Ăхă.

**Павăл мучи.** Вăрçăра кашниех çавăн пек тăвĕччĕ. Ун чухне, мăнукăм, пурте паттăр пулнă. Никам та хăйĕн пурнăçне шеллемен. Кашниех çĕнтерӳ патне талпăннă. Пулчĕ те... *(Наградăсене пурне те типтерлĕн пуçтарса хайĕн вырăнне чиксе хурать)*.

**Митюк** *(Саша çине пăхса)*. Атя урама, килте мĕн туса ларатăн?

**Саша.** Атя. *(Аслашшĕ çине пăхса)*. Асатте, эпĕ урама тухатăп. Юлташăм пасăрах кĕтет.

**Павăл мучи.** Тух, тух, мăнукăм. Уçăлса кĕр, эпĕ вара выртса канăп. Сирĕнпе каласса кăшт ывăнтăм та. Вăйсăрлантăм иккен. Сывлăхĕ те чаксах пырать. Вăрçă суранĕсем те хăйсем пирки ас илтерсех тăраççĕ. *(Кулса илет те вырăн çине кайса выртать)*.

**Иккĕмĕш курăну**

*Урамра. Çанталăк ăшă. Ача сасси илтĕнет. Пĕрисем хăйăр купи çинче выляççĕ, теприсем çывăхри кӳлĕ хĕрринче хĕвĕшеççĕ. Митюкпа Саша та шывра чăмпăлтатнă, халĕ киле утаççĕ.*

***Саша.*** Ах, шывĕ мĕн тери ăшă. Пĕр кĕрсен тухас та килмест!

***Митюк.*** Чăнах та, хăй патне пылпа сĕрсе хунă пек илĕртет. Саша, пĕлетĕн-и, нумай пулмасть телевизорпа вăрçă вăхăтĕнчи наградăсем пирки передача куртăм. Ай-уй вĕсем мĕнле хаклă! Унта ылтăн та пур теççĕ!

**Саша** *(Митюк çине ăнланмасăр пăхса)*. Митюк, эсĕ кунпа мĕн тесшĕн вара?

**Митюк** *(чăрăнса тăрса)*. Саша, эсĕ тахçанах велосипед илесшĕн ĕмĕтленетĕн вĕт! Çакăн пирки унчченех калаçатăн...

**Саша.** Анне укçа пулсанах илсе пама шантарчĕ те-ха... Çак енчен хĕсĕкрех. Алă çавăрса ярсанах туянĕç-ха.

**Митюк.** Сана хăçантанпа шантараççĕ-ха ĕнтĕ вĕсем? Акă, аслаçун медалĕсене сутсан мĕн чухлĕ укçа пулать! Пĕр велосипед кăна мар, иккĕ-виççĕ те илме пултаратпăр вĕт! Чаплисене!

**Саша.** Асатте вĕсене сутса ярас çук.



**Митюк.** Эпир унран ыйтмастпăр та...

**Саша.** Çын япалине ыйтмасăр мĕнле илме пулать ăна? Юрамасть ун пек! Вăл манăн асатте вĕт!

**Митюк.** Халь шыв сыпăпăр – никама та пĕр сăмах та шарламăпăр. Кайран, велосипеднее илсен, пурне те ярăнма паратпăр!

**Саша** *(иккĕленсе)*. Çавах çын япалине ыйтмасăр илме лайăх мар вĕт-ха... Анчах велосипед илсен, тен, тата та лайăхрах пулĕ. Митюк, медалĕсене мĕнле илмелле-ха? Вĕсем асатте пӳлĕмĕнчи шкапра-çке.

**Митюк.** Санăн аслаçу кашни кунах кӳршĕ патне кăсса ларма юратать-çке. Вăл килтен тухсанах вăрттăн кĕретĕн те илетĕн.

**Саша.** Калама çăмăл та... Аван мар-çке. Илнине пĕлсен мĕн темелле вара?

**Митюк** *(юлташĕ унпа килĕшнине курса)*. "Курман, илтмен", – тетпĕр. Вăл вĕсемпе пĕрех усă курмасть. Ахалех çакăнса тăраççĕ.

**Виççĕмĕш курăну**

*Павăл мучи кӳршĕсем патĕнче. Саша унăн пӳлĕмне кĕрсе мĕн пур наградăна пуçтарса тухса каять. Павăл мучи Петр Михайловича кӳрше хăй патне хăнана чĕнет. Иккĕшĕ те иртнĕ кун пирки калаçаççĕ, аса илĕве путаççĕ.*

**Павăл мучи.** Тĕрĕс калатăн, Петр Михайлович! Вăрçă лайăххи патне илсе пымасть. Çапăçу хирĕнче мĕн чухлĕ ырă çын вилет-çке!

**Петр Михайлович.** Çавăн пек çав. Пичче те вăрçă хирĕнче пуç хучĕ. Анне мĕн тери кулянчĕ тата...

**Павăл мучи.** Вăрçа пулах сывлăх та хавша пуçларĕ. Тăрсан-тăрсан чĕре те ыратса илет... Пулса иртсе кайнă ĕнтĕ. Вăхăта каялла тавăраймăн... Юрать, тăван çĕр-шыв пире манмасть, правительство ветерансене пăхать. Акă вăрçăра паттăр çапăçнăшăн мĕн чухлĕ награда парса чысларĕç!

**Петр Михайлович.** Чăнах. Вĕсем манăн та нумай. Санăн вара ытларах та пулĕ. Кăтарт-ха, тепĕр хутчен иртнĕ кунсене аса илер.

**Павăл мучи** *(шкап еннелле утса)*. Часах, акă çакăнтаччĕ вĕсем... *(Чи çӳлти çӳлĕке хыпашлать)*. Ăçта-ха вĕсем? Кунтах хунăччĕ-çке... *(Орденсем çуккине ăнланса)*. Ах, ăçта кайса кĕчĕç-ши? Нумай пулмасть мăнукăмпа пĕрле пăхса лартăмăр. Ах, чĕре чиксе кайрĕ... Мĕн ку? Кунтахчĕ-çке!!!

**Петр Михайлович** *(Павăл мучи патне чупса пырать)*. Павăл, мĕн пулчĕ санпа?! Мĕн пулчĕ?! *(Павăл мучи чĕрине аллипе тытса урайне ӳкет. Петр Михайлович ăна тытса ĕлкĕрет, диван çине илсе кайса выртарать)*. Часах васкавлă пулăшăва чĕнсе килетĕп, чăт пăртак... *(Павăл мучи тăнне çухатать. Петр Михайлович чупса тухса каять)*.

**Тăваттăмĕш курăну**

*Павăл мучие пульницăна илсе каяççĕ. Тухтăрсем ăна вилĕмрен çăлса хăвараççĕ.*

**Светлана** *(палатăна кĕрсе)*. Павел Иванович, эсир хăвăра мĕнле туятăр?

**Павăл мучи.** Лайăххах. Эсир пулăшнипе сывлăх пăртак çирĕпленчĕ, кĕçех ура çине тăрăп.

**Светлана.** Сывлăха упрас пулать çав. Эпĕ сире укол тума килтĕм-ха. *(Укол тăвать)*. Пулчĕ те. *(Алăкран шаккаççĕ)*. Кам унта? Кĕрĕр. *(Палатăна Сашăпа Митюк кĕреççĕ. Саша аллинче – хутаç)*.

**Саша** *(аван марланса, пуçне пĕкнĕ, куçне тартать)*. Эпир кунта, асатте.

**Павăл мучи.** А-а, ку манăн мăнукăм. Кĕр, кĕр, Саша. Митюк, эсĕ те кунта-и? *(Ачасем аслашшĕ патне пыраççĕ. Медсестра палатăран тухса каять)*. Килĕр-ха, сире çупăрлам, телейĕм-çке эсир манăн, сирĕншĕн çеç пурăнатпăр. Эсир сывă пурăнччăр тесе юн тăкнă вăрçăра эпир!

**Саша** *(хĕрелсе кайнă куçне çĕрелле антарса)*. Асатте, каçарсам пире, эсĕ пульницăна лекнĕшĕн эпир айăплă...

**Митюк.** Каçарăр. Тархасшăн, каçарăр.

**Павăл мучи** *(ăнланмасăр ачасем çине пăхса)*. Мĕншĕн каçармалла? Эсир нимĕн те туман-çке. Вăрçă ахрăмĕ чирлетнĕ мана.

**Саша** *(аллинчи хутаçне аслашшĕне тыттарать. Павăл мучи ачасем унăн наградисене илнине ăнланать. Куççульне çăтать)*. Асатте, эпир илтĕмĕр вĕсене.

**Павăл мучи.** А-а-а, эсир-и... Ан йĕр, мăнукăм, эсĕ манăн орденсене илнинчен хăвăн айăпна йышăнни пахарах. Анчах çавăн пек нихăçан та ан ту! Сăмах пар, Саша. Эсĕ те, Митюк...

**Сашăпа Митюк.** Эпир ун пек нихăçан та тумастпăр!!! *(Павăл мучи пичĕ çинче йăл кулă палăрчĕ. Вăл ачасене пуçран ачашларĕ). Каçарсамăр пире! (Ачасем аслашшĕ çумне йăпшăнчĕç).*

**Чаршав.**

***Катя АЛЕКСАНДРОВА.***

Йĕпреç районĕ

Çăкалăх ялĕ.

# Хаваслă 2014 самант

**Ăнлантарни:** Çӳлти сас паллисене аяла, кăтартнă йĕрсем тăрăх вырнаçтарса тухмалла. Ун чухне вара ваттисен каларăшне вуласа пĕлме пултаратăр.




**Енчен те ыйтусене тĕрĕс хуравласан, палăртнă йĕркере эсир Чăваш Республикин Пуçлăхĕн хушаматне шыраса тупатăр.**

| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | | |
| | | | | | | | |
| | | | | | | | |
| | | | | | | | |

1. Кухньăри кăмака. 2. Самолетсен гаражĕ. 3. Пулас çăкăр. 4. Литература жанрĕ. 5. Чăваш кӳрши. 6. Грек алфавичĕн пуçламăш сас паллийĕ. 7. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн параççĕ. 8. Пахча çимĕç.

*Эсир çĕре çитиччен шутлама пĕлетĕр пулĕ-ха, анчах кунта хăйне евĕрлĕх пур. Цифрăсене вертикаль е горизонталь тăрăх çеç вырнаçтармалла, юнашар кăна. Апла тăк çула тухма вăхăт.*

| | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 3 | | | | | | | | | 14 |
| | 1 | 32 | | 26 | 25 | | 11 | | |
| | 36 | | | | | | | 17 | |
| | | | | | | | | | |
| | 40 | | | 53 | 54 | | | 61 | |
| | 41 | | | 52 | 55 | | | 60 | |
| | | | | | | | | | |
| 100 | 93 | | | | | | | 72 | |
| | | 95 | | 85 | 86 | | 76 | | |
| 98 | | | | | | | | | 69 |

*Çак телефон çаврашкинче ваттисен каларăшĕ пытаннă. Ăна тупма вара асамлă çăраççи пулăшĕ. Анчах ăçтан пуçламалла-ши? Эппин, шырăр, тупăр! Ăнăçу сунатпăр.*




*Виçĕ вĕçен кайăк,
Виçĕ клеткăра.*

*Вĕсем вĕççе кайĕç.
Тупсăмне шыра.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| | А | Н | А |
| | К | Ă | Ш |
| | А | Л | И |
| | В | А | Л |
| | А | Н | Т |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | А | К | А |
| | С | А | Н |
| | А | М | А |
| | А | Р | А |
| | П | А | Т |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | У | П | А |
| | Й | Ă | Х |
| | А | К | А |
| | В | А | Р |
| | У | Р | А |

Пallă тунă клеткăсене кирлĕ сас паллисене çырса хумалла, çав йăваран вĕçсе тухĕç те кайăксем.

## Цифрăсене шĕкĕлчетĕп, Ăçта мĕн лартмаллине пĕлетĕп...




2
42
47
70
86

3
178
203
243
331
339
374

581
712
824
840
850
961

4
1050
1250
1252
1478
1543

1787
2007
2300
3021
3579
4755
9657

5
25989
76280
80800
83289

6
721010
757778
842008
907112

7
2462180
5970600
6621916
8915046

*Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.*